Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
16
ЙУНКУН
61 (4874)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Чебокса[illegible]
Ц. Б. им. Горького
О

СОВЕТ ХАЛĂХĔН ПРИГОВОРĔ

Ĕнер енĕр ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ мартăн 18-мĕшĕнче совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" ĕçĕ тăрăх йышăннă приговора пичетлесе кăлартăмăр. ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ Бухарина, Рыкова, Иагодана, Крестинскине, Розенгольца, Иванова, Чернова, Гринькона, Зеленскине, Икрамова, Ходжайева, Шаранговича, Зубарева, Буланова, Левина, Казакова, Максимов-Диковскине, Крючкова **перce пăрахмала**, Плетнева 25 çуллăха, Раковскине 20 çуллăха, Бессонова 15 çуллăха тĕрмене хупмала приговор йышăннă.

Тăван çĕршыва сутакансене, шпионсене, провокаторсене, сăтăрçăсене, диверсантсене, çын вĕлерекенсене мухтавлă совет разведки преступлени тунă çĕрте тытса пролетари диктатурин çирĕп аллине пачĕ. Совет государствин сучĕ совет халăхĕн усал тăшманĕсене, фашисла бандитсене, шпионсене, диверсантсене тивĕçлипе айăпларĕ, совет халăхĕ ыйтнă пек çирĕп приговор йышăнчĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блока" хутшăннисем шпионлă ĕç тунине, йутçĕршыв разведкисене ССР Союз оборонин вăрттăн сведенисене сутнине, диверсилĕ, сăтăрлă ĕç тунине судра тĕплĕн тупса палăртнă. Изменниксем, предателсем ССР Союзĕнчи Украинăна, Приморйене, Белоруççине, Вăтам Азири республикăсене, Грузине, Армениие, Азербайджана уйăрса фашисла çĕршывсен колонийĕсем туса хума шутланă. Троцкисла-бухаринла-рыковла бандитсем болşевиксен партин, пĕтĕм совет халăхĕн шанчăклă, мухтавлă ывăлĕсене Менжинскине, Кирова, Куйбышева, Максим Горькине, тата унăн ывăлне вĕлернĕ. Çак тискер бандитсем, вăрă-хурахсем Совет Союзĕнчи халăхсен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçне пĕтерсе, вĕсене капиталиссемпе улпутсен чури туса хурасшăн пулнă. Вĕсем фабриксемпе заводсене капиталиссене, колхозсемпе совхозсене пĕтерсе, ĕçхалăхĕ йун йухтарса кĕрешсе илнĕ çĕре — улпутсемпе кулаксене кайала тавăрса пама хатĕрленĕ.

Анчах тăшмансен киревсĕр те тискер ĕçне çийĕнчех çапса хуçнă. „Сылтăмла-троцкисла блока", халăхăн усал тăшманĕсен блокне совет çĕрĕ çинчен шăлса ывăтнă. Пролетари диктатури сучĕн çивĕч хĕçĕ изменниксен, шпионсен, вăрăхурахсен пуçĕ çине ӳкрĕ.

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ йышăннă приговор хăватлă совет халăхĕн хайар приговорĕ пулать. Пĕтĕм Совет çĕршывĕ Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесне тимлĕн сăнаса пычĕ. Совет Союзĕнчи пур халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ те рабочисен, колхозниксен, служăщисен, вунçăр, çĕршер митингĕсенче, пухусенче тăван çĕршыва сутакансене, фашисла государствăсен шпионĕсемпе разведчикĕсене, диверсантсене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерме ыйтрĕ. Çав тери тискер те киревсĕр преступлени тунă бандитсене ылханман, тарăхман, вĕсене совет çĕрĕ çинчен шăлса ывăтма ыйтман пĕр предприйати, пĕр колхоз, пĕр учреждени те пулман. Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Чăваш республикинчи ĕççыннисем Верховнăй Суд приговорне хаваслăн йышăнса илеççĕ, тăшмансене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтернĕшĕн савăнаççĕ.

„Ĕнер ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ тăван çĕршыв тăшманĕсене перce пăрахма йышăннă приговора пĕтĕм кăмăлран ырлатпăр. Ĕнер тăван çĕршыва сыхлама пĕр çын пек хатĕр тăратпăр"—теççĕ Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан ертелри рабочисемпе служăщисем. Кунашкал резоlюцисем нумайăн килеççĕ.

Советлă социалисăмлă строй халăх телейĕпе тачă çыхăнса тăрать. Троцкисла-бухаринла-рыковла бандитсем совет халăхне сахал мар сийен кӳнĕ. Вĕсем пулас вăрçăра Совет Союзне çĕнтермелле тума хатĕрленнĕ, пирĕн çĕршывра капиталисăма кайала çавăрса килесшĕн, фашисла строй тăвасшăн пулнă, рабочисемпе колхозниксен йунне йухтарма шутланă. Анчах та, Сталинла нарком Н. И. Иежов йулташ йертсе пынипе ĕçлекен мухтавлă совет разведки преступниксен шайккине çийĕнчех тытрĕ, вĕсем тăван çĕршывпа халăх çине хăйсен варалайчăк аллине хума хатĕрленнине сирсе пăрахрĕ.

Заговорщиксен, „сылтăмла-троцкисла блокăн" пуçлăхĕсене перce пăрахнă хыççăн троцкисла-бухаринла-рыковла бандитсен хӳçисем хăйсене сутăннă шанчăклă тарçисене çухатаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ йышăннă приговор вăрçă пуçлама хатĕрленекен фашисла агрессорсене пуçран çапни пулать.

Анчах та пирĕн çĕршыва капиталисăмла государствăсем хупăрласа тăнине пихăçан та манмала мар. Фашисла агрессорсем пирĕн çĕршыва хăйсен шпионĕсене, хăйсен агенчĕсене малашне те йарса тăрасси çинчен нимĕн иккĕленмели те çук.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блока" аслă совет халăхĕ çĕмĕрсе тăкни —пирĕн аслă халăхăн тăшманĕсене питĕ хытă, хайаррăн асăрхаттарнине пĕлтерет. Мĕлйунлă ĕçхалăх масси пулăшнипе, вăл йуратнипе ĕçлекен совет разведки фашисла шпионсене, провокаторсене, диверсантсене, сăтăрçăсене тĕмĕнле вăрттăн шăтăкран та туртса кăларать.

Совет халăхĕ революцилĕ сыхăлăхпа хĕçпăшалланчĕ, вăл пирĕн тăван çĕршывăн усал тăшманĕсем тĕмĕнле маскă тăхăнсан та тупса пĕтерме пултарать.

Совет халăхĕ хăй Октаберти социалисăмла революцире кĕрешсе илнĕ телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа никама та парас çук, вăл ăна куç шăрçине сыхланă пек хытă сыхлать. Тăшман пирĕн телейлĕ пурнăç çине тапăнма хăтлансан, ĕнер ăна çапса аркатма хатĕр тăратпăр.

Куççене çивĕчрех тытар, революцилĕ сыхăлăха çӳлерех çĕклер. Тăшман тĕмĕнле вăрттăн, чейен, икĕпитленсе ĕçлеме хăтлансан та, ăна çийĕнчех тупса çапса çĕмĕрмелле.

Совет разведкипе Совет Сучĕ троцкиссем, зиновйевцăсем, бухаринцăсем, рыковцăсем, буржуалă националиссем, меншевиксемпе эс-ерсем тунă сăтăрçăсен, диверсантсен, шпионсен, вăрă-хурахсен çăмхине сӳтсе тăкрĕç.

Суд приговорĕ—вăл пĕтĕм совет халăхĕн приговорĕ. Совет халăхĕ тăшмансене перce вĕлермелле тунине пĕр кăмăллăн йышăнса илчĕ. Совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне ирсĕрлĕхрен, çĕлен-калтасенчен, урнă йытăсенчен тасатнипе савăнать. Совет халăхĕ Ленин—Сталин парти тавра, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тачă пĕтĕçсе тăрать, вăл йертсе пынипе коммунисăм патне çĕнтерӳлĕн пырать.

Совет ĕçхалăхĕ приговора ырлать

Пĕртен-пĕр тĕрĕс приговор

(Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Советĕнче ĕçлекенсен митингĕ йышăннă резоlюци)

Ĕнер, ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Советĕнче ĕçлекенсем совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" пирки Верховнăй Суд йышăннă приговора чĕрре тулли кăмăлпа пĕрсаслăн ырлатпăр.

Пирĕн чечекленекен тăван çĕршыва тĕп тăвасшăн нимĕнле преступленирен те йĕрĕнсе тăман, темиçе çул хушши хăйсен ирсĕр ĕçĕсене туса пынă тискер бандитсене—Бухарина, Рыкова, Иагодана, Крестинскине, Левина т. ыт. те—перce пăрахмала туни пĕртен-пĕр тĕрĕс приговор пулать. Вĕсем, çав „сылтăмла-троцкисла блокри" тискер шпионсем, диверсантсем тата çынвĕлеренсем—пирĕн мухтавлă çулпуççен пурнăçĕ çине, пирĕн телейлĕ пурнăç çине алă çĕкленĕ, С. М. Кирова вĕлернĕ, социалисăмла тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене—Куйбышев, Менжинский, Максим Горький йулташсене вĕлернĕ.

Фашисла урнă йытăсене йытă вилĕмĕ!

Ĕнер хамăрăн революцилĕ сыхăлăха хăпартса халăхăн ирсĕр тăшманĕсене тĕпĕтымарĕпех тăпăлтарса пĕтерме мухтавлă наркомвнуделцăсене пĕтĕм вăйпа пулăшатпăр.

Хамăрăн коммунисла парти тавра тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата тачăнрах пĕтĕçетпĕр.

Ĕнер ыйтни пурнăçа кĕчĕ

ШАХАСАН. ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" пирки йышăннă приговора радиопа пĕлтернĕ хыççăнах учреждениссенче, колхозсенче тата шкулсенче массăлă митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксем, служăщисем, трактористсемпе комбайнерсем, вĕренекенсемпе учителсем—пурте Верховнăй Суд приговорне ырлаççĕ.

Район центрĕнче пулнă ĕççыннисен митингĕ, мĕн пур ĕçхалăхĕн шухăшне палăртса, çакăн пек резоlюци йышăнчĕ;

„Ирсĕр çĕлен-калтасен ĕмĕрĕ таталчĕ. Чи лайăх ленинец-сталинец Николай Иванович Иежов йертсе пыракан совет разведки вĕсен ĕмĕтне çапса хуçрĕ. Паттăр совет разведкине чĕререн тав тăватпăр. Малала болşевисăма алла çавăрса илсе революцилĕ сыхăлăха вăйлатма, производствăри дисциплинăна хăпартма, стахановла йухăма тата анлăнрах сарса йама, социалисăмлă обществă тунă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлеме сăмах паратпăр.

Сывă пултăр совет разведки тата унăн çирĕп руководителĕ Иежов йулташ!

Сывă пултăр коммуниссен партийĕпе ăна йертсе пыракан аслă Сталин!"

С. Соколов.

Халăх ылханĕ çитрĕ

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă ушкăнри тăшмансен ĕçне пăхса тухса, вĕсене перce пăрахмала приговор йышăннине радио тăрăх пĕлсен, мартăн 13-мĕшĕнче Чăвашсен йуридический шкулĕнче, вĕренекенсемпе вĕрентекенсем митинг туса иртерчĕç.

Митинг суд приговорне ырласа, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсене тата унăн Сталинла наркомне Иежов йулташа тăшмансене тăрă шыв çине кăларас ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн тав турĕ.

Игнатйев.

Революцилĕ сыхăлăха тата ытларах ӳстерер

СĔНТĔРВĂРРИ, мартăн 14-мĕш. (Телефон тăрăх). Мартăн 13-мĕшĕнче ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ „сылтăмла-троцкисла блокри" бандитсен ушкăнĕ пирки приговор йышăннине пĕлсен, хулари ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ.

Митинг суд приговорне ырласа, пĕр сасăпах çакăн пек резоlюци йышăнчĕ:

„Ĕнер, митингра пулнисем, Верховнăй Судăн Çар Коллегийĕ ирсĕр тăшмансем пирки йышăннă приговора чĕререн ырлатпăр. Ĕнер тăшмансен киревсĕр ĕçĕсене хирĕç хамăрăн болşевикла сыхăлăха тата ытларах ӳстеретпĕр. Çĕршыв оборонине тĕреклетме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлетпĕр, тăван çĕршыва сыхлама йаланах хатĕр тăратпăр. Пирĕн ирĕклĕ те телейлĕ тăван çĕршыв çине никам та ура пусма ан хăйтăр!

Вилĕм тăшмансене!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

Сывă пултăр совет разведки—социалисăмла çĕршывăн вичкĕн хуралçи!

Сывă пулччăр Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем тата унăн руководителĕ Йежов йулташ!"

Митингра 600 çын ытла пулчĕ.

С. Прокопйев.

Приговора ырлаççĕ

ЕЛĔК. Халăхăн йунлă тăшманĕсене—Бухарина, Рыкова, Йагодана т. ыт. те ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ перce вĕлермелле тунă приговорне радио тăрăх итленĕ хыççăн, районри колхозсенче митингсем пулса иртрĕç.

Мартăн 13-мĕшĕнче „Çĕнĕ çул" колхозра митинг пулчĕ. Митингра 70 çынна йахăн пулчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем суд приговорне ырларĕç. Алексейев колхозник çапла тухса каларĕ:

„ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ çав çĕлен-калтасене тивĕçлипе айăпларĕ. Ĕнер çавна кĕтнĕ те. Вăл шпионсем чечекленсе ӳсекен совет çĕршывĕнче тепĕр хут капиталисăмла йĕрке туса хурасшăн пулнă. Вĕсем вaljи совет çĕршывĕнче пĕр пусăм та вырăн çук!"

В. Йефремов.

СЛАВА СТАЛИНСКИМ ПИТОМЦАМ—
БЕССТРАШНЫМ ГЕРОЯМ-ЗАВОЕВАТЕЛЯМ И ИССЛЕДОВАТЕЛЯМ СЕВЕРНОГО ПОЛЮСА,
товарищам ПАПАНИНУ, КРЕНКЕЛЮ, ШИРШОВУ, ФЕДОРОВУ!

Ӳкерчĕк çинче: Правдин, Денисов, Ватолина, тата Правдина художниксен бригади ӳкернĕ плакат. Ăна ИЗОГИЗ Çурçĕр полюсне çĕнсе илекен паттăрсен, ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕсен—Папанин, Ширшов, Кренкел тата Федоров йулташсен йачĕпе кăларнă. Союзфото репродукцийĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсене Совет Союзĕн Геройĕ званине парасси çинчен

Совет Союзĕн оборонă хăватне çирĕплетес тĕлĕшпе правителствăн йатарласа панă заданийĕсене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата вăл ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн çак çынсене Совет Союзĕн Геройĕ званине парас:

1. **Александр Сергейевич Сенаторов** полковнике.
2. **Иван Иванович Душкин** майора.
3. **Владимир Илларионович Шевченко** майора.
4. **Сергей Йаковлевич Лапутин** лейтенанта.
5. **Владимир Федорович Кручинин** кĕçĕн командира.
6. **Павел Афанасйевич Семенов** кĕçĕн командира.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ—**М. КАЛИНИН.**

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ—**А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремlь.
1938 çулхи мартăн 14-мĕш.

Наградăсем

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сойединенисем, чăçсем тата подразделенисем çапăçу ĕçне, политикăпа тата техникăпа вĕреннĕ çĕрте калама çук паллă çитĕнӳсем тунăшăн ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе командирсене, политработниксене, кĕçĕн командирсене тата красноармейцăсене—мĕн пурĕ 213 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Папанинцăсем тăван çĕршыва çитнĕ

Мускав мартăн 15-мĕшне. Мартăн 15-мĕшĕнче 16 сехет те 20 минутра, Ленинградри суту-илӳ портне „Йермак" пăрçĕмĕрен çитсе ларнă. Ун хыççăн „Мурманец" тата „Йермака" кĕтсе илме хирĕç тухнă „Трувор" çитнĕ.

(ТАСС).

Шăхасан райĕçтăвкомĕ финанс планне, аш-какай тăратассине тата вăрман хатĕрлессине тултарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлесе пыни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВLЕНИ

Шăхасан райĕçтăвкомĕн руководителĕсем, ларусенче тата канашлусенче калаçнипех, ĕçе тума сăмах панисемпех район умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме пулать тесе шухăшласа, пит пысăк йăнăш тăваççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Шăхасан райĕçтăвкомĕн руководителĕсене—Филиппов, Скворцов тата Смирнов йулташсене çакна ăнлантарса парать: районра ĕçсем кайа йулнине канашлусемпе ларусем иртернипех сирме çук,—çавăн чухне йалсоветсемпе колхозсен председателĕсем тата хатĕрлев организацисен руководителĕсем хăйсен обйазателствисене тултарма хавассăнах сăмах пăраççĕ пулин те,—ĕçсене тӳрлетсе йама кулленхи организацилĕ ĕçсене, ăнлантару ĕçĕсене пысăккăн туса пымала, çавă çитмест те ĕнтĕ Шăхасан райĕçтăвкомĕн руководителĕсен.

Шăхасан райĕçтăвкомĕн руководителĕсене—Филиппов, Скворцов, Смирнов йулташсене хăйсен районне кĕске срукрах прорывран кăларма, хуçалăхла-политикăла задачăсене правителствă кăтартса панă срукра тултарса пымала тума, ĕççене тăтăшах пĕр тикĕс, кирлĕ пек туса пымала тума хушас.

Çаксем çине уйрăмах çаврăнса пăхтарас: йалсоветсемпе колхозсен председателĕсем хушшинче дисциплинăна хăпартмала, вĕсем хуçалăхлă-политикăлă задачăсене, уйрăмăн илсен, районра йалхуçалăх продуктисене хатĕрлес тата финанс планне тултарас тĕлĕшпе активлă ĕçлетчĕр.

Филиппов, Скворцов тата Смирнов йулташсем—март уйăхĕ иртиччен районна прорывран кăларатпăр, тесе пĕлтернине асра тытса тăма йышăнас.

Çак çулхи мартăн 29-мĕшĕнче Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче Шăхасан райĕçтăвком председателĕн—Филиппов йулташăн докладне—районра пулса тăнă прорывсене мĕнле пĕтерсе пыни çинчен—итлес.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. СПАСОВ.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ **Н. ЖУКОВ.**

Шупашкар хули.
1938 çулхи мартăн 14-мĕшĕ.

ЙУЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Австри—„Германи империйĕн" çĕршывĕ

Германи çарĕсем Австрине пырса кĕнĕ май, Германире икĕ саккун пичетлесе кăларнă.—Пĕррремĕш саккун тăрăх Австри „Германи империйĕн çĕршывĕ" тесе пĕлтернĕ. Австрин Зейсс-Инкварт „правителстви" Германи империйĕн провинцин правителстви шутланать. Германи саккунĕсем Австри çине те сарăлаççĕ.

Иккĕмĕш саккунпа Австри çарĕсем Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен составне кĕреççĕ. Австри çарĕнче службăра тăракан çынсем пурте Гитлера, верховнăй главнокомандуйушчи текенскерне, присăгă памала.

Австри „профсойузĕсен пĕрлешӳвĕн" комиссарне Германи фашисне, Австри профсойузĕсене Германири фашисла „ĕçлĕх фронтне" кĕртме задани илнĕскерне, лартнă.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер Линцран Венă хулине тухса кайнă.

(ТАСС).

Германи фашисăмĕн Чехословакири хăтланувĕсем

Чехословаки пичечĕ çапла пĕлтерет: хаlь кăна ĕнтĕ паллă пулчĕ, йанвар уйăхĕн вĕçĕнче Германире „судетла-нимĕççен бригадă" членĕсен пысăк çар сийесĕ пулса иртнĕ.

Фашисла „судетла-нимĕççен бригади" 9.500 çынрăн, Генлейн партийĕн (Чехословакири гитлерла агентурăн) Чехословакинчен Германине тарса пынă членĕсенчен тăрать. Вĕсем валjи Германире йатарласах казармăсем тунă, унта çар ĕçĕпе шпионла ĕçе вĕрентеççĕ. Бригадă Чехословаки территорийĕнче саракан листовкăсенче: бригадăн тĕллевĕ—Чехословакинчи судетла-нимĕççен облăçне Германи çумне пĕрлештересси („аншlюс") пулать,—тесе çырнă.

Çав сийесра уççăнах: „çăлăнас кун ĕнтĕ инçех мар", — тесе каланă.

(ТАСС).

Австрири террор

ЛОНДОН, 13-III. Рейтер агентствин Венăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хаlхи вăхăтра Австрине икçĕр пинрен кайа мар Германи çарĕсем тата кусемпе пĕрле „Австри легионĕ" йатлă 40 пин çын кĕрсе кайнă. Венă таврашĕнче 18 пине йахăн Германи çарĕсем тата 200 бомбардировщикрен кайа мар тăраççĕ.

Пĕтĕм çĕршывра гитлеровцăсем вăскасах „отечествăлă фронт" представителĕсене аслă вырăнсенчен хăтараççĕ, хăйсем майлисене лартаççĕ. Провинцири влаççен нумай представителĕсене ĕçрен кăларса, вĕсем вырăнне урăххисене лартнă. Мартăн 12-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен штурмовиксен отрйачĕсем тата Германи салтакĕсем тийенĕ 30 çар грузовикĕсем канцлер резиденцийĕ патĕнче вырнаçнă. Кайарахпа вĕсем Венăри рабочисен кварталĕсене кайнă.

Мартăн 11-мĕшĕнче çĕрле пиншер çемйесем Австрирен тухса кайма тытăннă. Нумайĕшĕ Чехословакипе Венгри чиккисене хупаччен чикĕ урлă каçса кайнă. Пуйăссем шăпах тулса ларнă. Çарсемпе полицисем пуйăссене чарса ухтарусем тунă.

„Таймс" хаçатăн Венăри корреспонденчĕ мартăн 11-мĕшĕнче çĕрле Галлейнри тăвар кăларакан вырăнсенче (Заlцбург провинцийĕ) фашисăма хирĕç забастовкăсем пуçланни çинчен пĕлтерет. Унта йанă çарсем забастовкăна путарса лартнă.

„Сандей експресс" хаçатăн Венăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Венăра фашиссен охранăлă отрйачĕсем—фашиссене хирĕç кĕрешекенсене кăмăлласа пăхать, тесе шутлакан рабочисене хулăсемпе хĕненĕ. Вĕсемпе пĕрлех, „пулса пыракан событисем пирки савăнăçлă питкуçлă" пулманнисен те фашиссен асапне тӳсмелле пулнă.

(ТАСС).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Государствă йенчен айăплаканĕн—ССР Сойуз Прокурорĕн А. Й. ВЫШИНСКИЙ йулташăн сăмахĕ

(Малали. Пуçламăшĕ иртнĕ номĕрте)

Есĕр Камков кăтартса панисене астăватăр. Камков вăл „сулахай“ ес-ерсен Тĕпкомĕн паллă йертсе пыраканĕсенчен пĕри, Камков çапла кăтартса пачĕ: вăл Брестри килĕшӳ ыйтăвĕ тăрăх 1918 çулта Бухаринпа калаçнă, çак ыйту тăрăх кĕрешӳ Бухарин сăмахĕсем тăрăххăн, çав тери çивĕч формăсемпе пулса пырать, „сулахай коммуниссем“ хушшинче çĕнĕ правительствă тăвасси çинчен сӳтсе йаваççĕ. Камков çапла каласа пачĕ: Бухарин Пйатакова çĕнĕ правительствăна йертсе пыракан тума йурăхлă кандидат пулса тăрать, терĕ тата çапла пĕлтерчĕ: правительствăна хăйне улăштарасси те Ленин пуçпулса тăракан правительствăн пĕтĕм составне арĕсленипе пулмаласкер,—терĕ.

Çакна Бухарин тунмарĕ. Анчах та Бухарин пирĕн çулпуççене вĕлермели плана вĕсем туман, теме хăтланать.

Вăл çак ыйту тăрăх хăйне тӳрре кăларма мĕнле тăрăшрĕ-ха? Тунмисĕр пуçне, урăх нимĕнле те мар. Кунта унăн çăнне Йаковлевă уçса кăтартрĕ, унăн çăнне кунта Осинский уçса кăтартрĕ, унăн çăнне кунта Манцев уçса кăтартрĕ, унăн çăнне кунта Карелин уçса кăтартрĕ. Бухарин тунать. Анчах нимĕнпе те çăлтавласа памасăр тунмине аргумент вырăнне шутламалли çук, унтан та ытларах, çавăн пек тунми логикăна хирĕç пырать.

Çак факт—Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлермели план—пулман пулсан, мĕншĕн-ха ун çинчен Карелин та, Йаковлевă та, Осинский те, Манцев та каласа паччăр,—çакăн пек намăслă та тискер факта, тăван çĕршыва хирĕç тунă çакăн пек тĕлĕнмеле хăрушă преступленине уçса палăртни çав çынсен интересĕсемшĕн мар.

Бухарин хăйĕн „сулахай коммуниссен“ ушкăнĕпе, Троцкипе тата унăн ушкăнĕпе пĕрле тата „сулахай“ ес-ерсемпе пĕрле, Ленин, Сталин тата Свердлов йертсе пыракан Совет правительствине вăйпа сирпĕтсе антарма хатĕрленни çинчен, çавăн пекех Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслеме хатĕрленни çинчен вăл йышăнчĕ.

Анчах çав вăйпа сирпĕтсе антарас тени мĕне пĕлтернине Бухарин пĕлет-ши? Вăйпа сирпĕтсе антарас задачăпа сыхăннă арĕссем мĕне пĕлтернине Бухарин пĕлет-ши? Вăйпа сирпĕтсе антарма тата арĕслеме хатĕр етемсем, вĕсем ирĕксĕрлес тата çынсене вĕлерес çул çине тăнине Бухарин пĕлет-ши!

Бухарин çакна йышăнчĕ, суд следствинче есĕр куртăр, ăна та, ниçта кайса кĕме çук пирки йурмала йышăнчĕ: 1918 çулта Бухарин совет власĕн йачĕ çеç йулчĕ, тенĕ, ăна пĕтерсе хума сĕннĕ.

Следстви çакна тупса палăртрĕ: Ленин, Сталин тата Свердлов йертсе пыракан Совет республикине хирĕç кĕрешсе пыма, Бухаринпа Троцкий 1918 çулта ес-ерсемпе блок тунă, вĕсем хĕçпăшаллă восстани тума хатĕрленнĕ, вĕсем Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслесе вĕлерме хатĕрленнĕ.

Çакна тупса палăртнă-и йе çук-и?

Пĕтĕмпех тупса палăртнă. Ăна Бухарин хăй кăтартса панисем тăрăх та тата Йаковлевăпа Карелин, Камков, Манцевпа Осинский кăтартса панисем тăрăх та тупса палăртнă.

Бухарин Совет правительствине йертсе пыракансене вĕлерме хатĕрленнине тунать, анчах мĕнле тунать-ха вăл? Епĕ сирĕнтен, судйа йулташсем, канашлу пӳлĕменче, Бухарин çак факта тунмин методне тĕплĕн астăвас майпа, пирĕн суд следствин çак тĕлĕшпе пулнă ларăвĕн протоколне пăхса тухма ыйтăттăм. Акă вăл калаçу. Заговора организацилекенсенчен пĕри вăл хăй пулнине Бухарин йышăнать.

Унран ыйтаççĕ: Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслесси çинчен уççăнах каланă-и есĕр?

„Бухарин. Арĕслесси çинчен калаçу пулнă, анчах та вĕлересси çинчен мар. Ку вăл Брестри килĕшӳве тавăччен мар, ун хыççăнхи вăхăтра пулнă. Вăл вăхăтра епĕ Пйатаковпа пĕрре калаçни пулнă, Карелинпа Камков пырса кĕрсен, вĕсем çапла пĕлтерчĕç: епĕр çĕнĕ правительствă тума хушатпăр,—терĕç.

Ыйту. Ку хăçан пулнă?

Бухарин. Ку вăл Брестри килĕшӳве тавăччен пулнă. Вĕсем çĕнĕ правительствăна Ленина 24 сехетлĕхе арĕслесе тума сĕнчĕç.

Ыйту. Правительствăна хăçан сирпĕтсе антармала пулнă тата ăна хăçан арĕслемеле пулнă, вăйпа ирĕксĕрлесе-и?

Бухарин. Çапла.

Ыйту. Арĕсленĕ чух ирĕксĕрлемели майсемпе ĕçлеме шутланă-и есĕр? Тĕрĕс ку йе çук?

Бухарин. Тĕрĕс.

Ыйту. Анчах çав вăйпа ирĕксĕрлесе ĕçлемели майсем мĕнре пулнă? Ăна есĕр тĕплĕн тупса палăртнă-и?

Бухарин. Çук, тупса палăртман.

Ыйту. Апла пулсан обстойателствăсем мĕнле май панипе тата вĕсем мĕнле хушнă, çавăн пек тума йышăннă?

Бухарин. Çапла, питĕ те тĕрĕс.

Ыйту. Обстойателствăсем пит çивĕч майсемпе ĕçлеме хушĕç?

Бухарин. Çапла“.

Çакăнтан ĕнтĕ вывод тума çăмăл—правительствăна сирпĕтсе антармала пулнă, ăна тăвас тесен правительствăна—Ленина, Сталина, Свердлова арĕслемеле пулнă, правительствăна сирпĕтсе антарас пирки пыракан кĕрешӳ обстановкине лару-тăру хушнă пек пур кирлĕ мерăсене те йышăнмала пулнă. Кĕрешӳ чи çивĕч формăпа пынă. Хăй каланă пек, ĕç çине Бухарин пек пăхас пулсан вĕлерессисинчен калаçни пулман пулин те, заговорщиксем хăйсем умне правительствăна сирпĕтсе антарас задача лартнă факт хăйех те, çав правительствăн руководителĕсене арĕслеме кирлĕ пулни хăйех те ĕнтĕ,—вĕсем вĕлерессинчен тем тесен те кайала чакма пултарайманнине уççăнах каласа парать.

Событисен пĕтĕм логики, çак кĕрешӳн пĕтĕм шухăшĕ, кĕрешӳ пынă атмосферăн пĕтĕм хайарлăхĕ çак ыйтун пĕтĕм çивĕчлĕхĕ—Брестри килĕшӳ пулассипе пулас марри, урăхла каласан, совет çĕршывĕ, социалисăмлă обществă тăвакан çĕршыв пулассипе пулас марри Брестри килĕшӳ пулассипе пулас марри, совет çĕрĕ, ăна вĕсем „формăлла“ çеç йышăнса çĕмĕрсе тăкма тăшман аллине парасшăн пулнă, пулассипе пулас марри çинчен ыйту каларса тăратнă,—çаксем пурте чăн-чăн кĕрешӳ пирки сăмах пыни çинчен пит те уççăн калаççĕ, вăл кĕрешӳ вĕлерӳсемпе уçă курнипе пĕтмеле пулнă, çавăн пек кĕрешӳ йаланах çавăн пек мерăпа уçă курнипе çыхăнса тăрать. Акă мĕншĕн калатăп епĕ: маншăн пулсан криминологи йенчен пăхсан мар, мĕншĕн тесен халĕ, çав преступленине тунăранпа 20 çул иртнĕ хыççăн, Бухарина епĕр хăй тĕллĕн айăпламастпăр—çакă вăл çынвĕлеренĕн заговорла ĕçĕпе контрреволюционер Бухаринăн тата унпа пĕрле ĕçленисен ĕçĕ хушшинчи çыхăнува, вĕсем çак тĕлĕшпе мĕн тунине хаклас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çаксем пурте историшĕн пысăк интереслă пулса тăракан ыйту тăрăх Бухарин совет çĕршывне хирĕç, Совет власне хирĕç, совет халăхне хирĕç тунă пур преступленисене те халĕ те пулин йышăнма пултарайманнине тата вăл вĕсене йышăнасшăн маррине кăтартса парас йенчен пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ 1918 çулхи августăн 30-мĕшĕнче тунă тĕлĕнмеле хăрушă преступленине те пĕтĕмĕшпех тупса палăртнă. Епĕ 1918 çулхи августăн 30-мĕшĕнче Владимир Илйич Ленина ес-ерла террористкă Каплан вĕлерме тăни çинчен калатăп. Карелин кунта çапла çирĕплетсе каларĕ: Ленина хирĕç терророла акт тăвас ыйтува Бухаринсăр пуçне урăх никам та тапратман,—тесе çирĕплетрĕ. Карелин çапла çирĕплетсе каларĕ: ун çинчен Прошйан „сулахай“ ес-ерсен Тĕпкомĕн членĕсене каласа панă,—терĕ. Карелин çапла çирĕплетсе каларĕ: „сулахай коммуниссен“ Бухаринпа вĕсен пуçлăхĕсем пĕлтернĕ çакăн пек требованийĕ сылтăм ес-ерсен партин Тĕпкомĕ Ленина хирĕç тунă терророла акта хăвăртлатнă“, терĕ. Çак тĕлĕнмеле хăрушă преступлени вăл—факт.

Осинский, Стуков сăмахĕсем тăрăх, çапла кăтартса пачĕ: вăл—Стуков—1918 çулхи августăн 30 мĕшĕнчи преступлени çинчен çавнашкалах шутланă.

„Бухаринпа пĕрле ес-ерсемпе çыхăннă Стуков 1918 çул вĕçĕнче,—тесе кăтартса пачĕ кунта Осинский,—мана хамах каласа пачĕ, сылтăм ес-ерка Фаня Каплан Ленина персе амантасси сылтăм ес-ерсен руководстви кăтартса панинчен çеç мар, тата блок хăй вăхăтĕнче Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлерме палăртса хунă ĕççене туса пынинчен те килнĕ“. (т. 44, л. д. 89).

Çапла кăтартса панисем ĕнтĕ Бухарин, çак икĕпитлĕ çын тата иезуит, туса пынă ирсĕр, сутăнчăклă, шуйттанла ĕç çинчен çителĕклĕ ĕнентерӳлĕн каласа параççĕ.

Бухарин хăйне мĕнле тытнинĕ тата Бухарина хăйне кирлĕ пек çутатса кăтартса парас тесе, çакна калас пулать: хăйĕн икĕпитлĕхĕпе, хăйĕн ирсĕр чейелĕхĕпе çак çын етемлĕх историйĕ халиччен пĕлнĕ чи ирсĕр те чейе, тĕлĕнмеле тискер преступленисенчен те иртсе кайнă.

Кунта, судра, вăл хăйне пĕтĕмĕшпех кăтартса пачĕ.

Епĕр утăмран утăма, çулран çул Бухаринăн политикăлă пурнăçĕ мĕнле пулнине сăнаса тухрăмăр.

Бухарин, çавăнтах партине те, çĕршыва та, социалисăм ĕçне те лайăхрах улталас та сутас тесе, миçе хутчен Ленин йачĕпе тупа туман пулĕ.

Асла учител çумне Иудă-предател пек чуптуса Бухарин миçе хутчен пырса сĕртĕнмен пулĕ!

Бухарин Василий Шуйскипе Иудă Искариота аса илтерет. Иудă Искариота чуптуса улталанă.

Николай Иванович Бухаринăн хăтланувĕсем те шăп та шай Василий Иванович Шуйскийĕнни пекех, ăна пире паллă писател Островский çырса кăтартнă пекех.

„Василий свет-Иваныч,
Что ни начни, все свято у него!
Заведомо мошенничать сберется
Или видимую пакость норовит,
А сам, гляди, вздыхает с постной рожей
И говорит: „Святое дело, братцы!.“

Çакăн пекех Бухарин та,—сăтарлă ĕççем, диверçисем, шпионаж организацилет, çынсене вĕлерес ĕçе организацилет, çийелтен пăхма вăл тӳлек, лăпкă, кăшт çеç светуй мар, Василий Иванович Шуйский: „Таса ĕç, тăвансемĕр!“, тесе калани Николай Иванович çăварĕнчен тухса илтĕнне пекех туйăнать.

Акă ĕнтĕ икĕпитлĕхĕн, суйалăхпа ултавăн, иезуитла хăтланнин, етемле мар ирсĕрлĕхĕн чи çӳлти тăррийĕ.

Шпионсем, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннăскерсем, капиталисăм реставраторĕсем

Суд следствийĕ туллин те уççăн тата ĕнентерӳлĕн çакна кăтартса пачĕ: „сылтăмла-троцкисла блок“ хăшпĕр йутçĕршыв государстви разведкисен чăн-чăн агентури пулнă, çак блок урлă, çак заговорла ушкăн урлă çав йутçĕршыв государствисем шпионаж, сăтарлă ĕç, диверçисем, террор тăвас, ССР Сойузĕн оборонă тĕрекне çĕмĕрес, провокаци туса çав государствăсем ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнас, ССР Сойузĕнчи халăхи социалисăмла стройа сирпĕтсе пăрахас, ССР Сойузĕнче çĕнĕрен капиталисăм йĕркипе буржуази власĕ туса хурас, ССР Сойузне татакăн-татакăн пайласа унтан Украинăна, Белоруççине, Вăтам Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана тата Приморйене татса илсе, çав çӳлте асăннă государствăсене парас тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн ĕçленĕ.

Следствире çакна палăртнă: блокăн хăйĕн хуçисем—Троцкий тата йутçĕршыв разведкисем пулнă, çак пĕтĕм преступлениле ĕçсем Йапони, Германи тата Польшă генераллă штабĕсенче туса хатĕрленĕ плансем тăрăх, тӳррĕмех çав штабсем йертсе пынипе пулса пынă.

Акă Чернов кăтартса панисем. Чернов полиципе йе полици чиновникĕ урлă Берлинра Обергаузпа çыхăнать. Нимĕç разведки совет власне сирпĕтсе пăрахма кирле тивĕçлĕ мерăсем йышăнать тесе каларĕ мана Обергауз, тет Чернов. Малала, Чернов йенне çаврăнса, Обергауз çапла калать: „Акă есĕр хăвăра Совет Сойузĕнчи оппозици тесе шутлаттăр, сирĕн организацилĕ вăйа пĕрлешес пулать. Есĕр власа алла илесшĕн пулсан, кĕрешӳри методсем пирки именсе ан тăрăр“. Кĕрешӳ меточĕсем çинчен каланă май, Обергауз сылтăммисемпе нимĕç разведки хушшинчи çыхăнува çирĕплетсе хума сĕнет. Вăл, сылтăммисен пĕтĕм организацине нимĕç разведкин тĕллевĕсемшĕн ĕçлемеле тума пулать, тесе калать.

Çакăнта, судра, сирĕн хуçасем камсем пулнă тесе ыйтсан, Чернов: „Рыковпа нимĕç разведкисĕр пуçне урăх,—никам та“, тесе ответ пачĕ. Çак паллă мар-и ĕнтĕ: çак „сылтăмла-троцкисла блок“ текен организаци хăшпĕр йутçĕршыв государствисен хăшпĕр разведкисен експозитури пулнă, урăх нимĕн те мар.

Çакăнта айăпланакан Шарангович хăй Польшă генераллă штабĕпе çыхăнса тăнă иккенне туллинех çирĕплетрĕ. Вăл çакна çирĕплетрĕ: Белоруççири вăрттăн ĕçлекен буржуалă-националиссен вырăнти организаци пуçлăхĕ пулса тăрса, вăл хăй умне Польшă разведкипе Польшă генераллă штабĕн интересĕсене пулăшса тăрас задачă лартнă.

Мĕнле-ха вăл организацин тĕп тĕллевĕсем? Ăна Шарангович хăй кĕскен палăртса пачĕ: совет власне сирпĕтсе пăрахса çĕнĕрен, капиталисăмла йĕрке туса хурасси, фашисла государствăсемпе вăрçă тухас мĕн пулсан, Совет Сойузĕнчен Белоруççине татса илесси. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртсе çитерес шутпа, ун сăмахĕсем тăрăх, Польшă генераллă штабĕпе тачă çыхăну йĕркелесе йама кирлĕ, тесе паллă тунă.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ çакăнта Рыков, сылтăммисен Белоруççири организацийĕ чăннипе илсен Польшă генераллă штабĕн експозитури пулнă, тесе калани йăлтах тĕрĕс. Кунта пире Рыков каларĕ: 1933 çултах-ха Карахан нимĕç фашисĕсемпе калаçусем иртернине епĕ пĕлнĕ, нимĕç фашисĕсем, Рыковăн çакăнта каланă сăмахĕсем тăрăх, сылтăммисем влаçа пыма пултарасси çине пит те ырă кăмăлпа пăхнă, влаçа илессине вĕсем пур тĕрлĕ майсемпе те саламласа, ăна тумашкăн пулăшма сăмах панă, терĕ.

Уççăнах курăнса тăрать, ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнма плацдарм хатĕрлес тата çав тапăну пулас мĕн пулсан, ССР Сойузне çĕнтермеле тăвас задачăна тӳррĕмех фашисла разведкăсен агентури пулса тăракан „сылтăмла-троцкисла блок“ умне нимĕç, Польшă тата ыттисен разведкисем лартнă.

Епĕр, йулашкинчен, Крестинский кăтартса панисене астăватпăр. Вăл çакăнта, процесра, хăйне хăтăлма май паракан çулсем хыпашласа шыраса, тапăна лекнĕ шăши пек, пĕр йенчен тепĕр йенне виркĕнме пикенсе пăхрĕ, анчах çапла туни пĕр шанчăксăр пулни палăрчĕ. Крестинский çакна йышăнчĕ: 1920—1921 çулсенчех-ха Троцкий кăтартувĕ тăрăх, вăл Крестинский, ытти троцкиссемпе пĕрле Сект генералпа, Германи рейхсверĕпе калаçнă, вăл çулталăкне икçĕр алла пин ылтăн маркăшăн Германин генераллă штабне шпионла сведенисем сутса тăнă. Германин çар шпионĕсем ССР Сойузĕн çĕрĕ çине пĕр чăрмавсăр килессине пурнăçа кĕртсе пынă.

ССР Сойузне Германи фашисăмĕн колонийĕ туса хураççисĕр пуçне урăх мĕн çинчен пынă пуль вара ун чух калаçу? Рейхсверпа тунă çав килĕшӳн, хăйĕн çиппиcемпе „сылтăмла-троцкисла блок“ тенĕскерĕн сутăнчăклăхĕпе тата предателствипе çыхăнса тăракан çав килĕшӳн тĕп шухăшĕ мĕнре тăни çинчен Крестинский хăй каларĕ. Кĕскен аса илтерме ирĕк парăр.

„Епĕр,—тет вăл,—пысăк мар хисеппе укçа илетпĕр, вĕсем вăрçăпа тапăннă чух хăйсене кирлĕ пулакан шпионла информаци илсе тăраççĕ. Анчах вăт,—хăйĕн карттисене уçса парса вĕрентет малала Крестинский,—Германи правителствине, уйрăм каласан Гитлера, тулти информацисем кăна мар, тата колонисем, территорисем кирлĕ. Вара вăл (урăхла каласан Гитлер), Англипе, Америкăпа тата Францпе çапăçса илме тивекен колонисем вырăнне Совет Сойузĕн территорине илнипе те кăмăлне тултарма хатĕр“. Ыйту вĕçне çитийех уççăн курăнса тăрать, теççĕ кун пек чух. Карттăсене, вĕсем хăть пăч-пач вараланчăк пулсан та, пĕтĕмĕшпех уçса хунă. Вĕсем каланă: „епĕр сире шпионла сведенисем кăна памастпăр, тата кирлĕ минутра епĕр сире фронтсене те уçса паратпăр. Маха колонисемшĕн сирĕн Англипе, Америкăпа тата Францпе çапăçас? Есĕр ССР Сойузне хăвăран колони туса хума пултаратăр. Кирек йепле пулсан та унăн чикĕ хĕрринчи чечекленсе ӳсекен республикĕсене, тĕслĕхрен Украинăна. Епĕр, сирĕн итлевлĕ тарçăсем, есĕр пире вăрттăн ĕç туса пыма пулăшса паракан ылтăн маркăсемшĕн сире совет çĕрне пама хатĕр тăнă чухне, ма-ха сирĕн колонисемшĕн Англипе, Америкăпа тата Францпе çапăçас?“

Çакăн пек ĕнтĕ вăл килĕшӳн шухăшĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок“—вăл сăтарçăсен, диверсантсен, çынвĕлеренсен, шпионсен идейăсăр, принципсăр банди кăна мар, вăл—чăннипех те йутçĕршыв разведкисен агенчĕсен банди, ăна шăпах çак сăмахсем тăрăх ăнланмала. Вăл тăшмана хапха уçса парать, вăл, хуласемпе йалсене пырса кĕнĕ тăшмана пулăшса, пытанса чӳречесенчен урамсем çине персе тăрать, хăйĕн тăван çĕршывне вăрçăра çĕнтерсе тăкма тăшмана пулăшу парать.

Крестинский çапла каларĕ: „Епĕр ССР Сойузĕнче капиталисăмла йĕркесене çĕнĕрен туса хурасшăн пулнă тата буржуалă государствăсене территорисем пама пулнă, епĕр кун пирки вĕсемпе калаçса таталнă“.

Чăннипе илсе каласан, блок тунă пĕтĕм преступлениле ĕççем çакăнта пулаççĕ ĕнтĕ.

Хăй кăтартса панисен намăссăрлăхĕ тĕлĕшĕнчен Гринько та Крестинскирен кайа йулмасть. Вĕт вăл: йутçĕршывсенчи разведкă хуçисем лартнă пирĕн задачă, пуринчен ытла, йутçĕршывсенчи агрессорсене пулăшасси пулса тăрать тесе, тӳррĕмех кăтартса пачĕ. Ку ĕнтĕ, терĕ çакăнта Гринько, троцкиссен те, сылтăммисен те, буржуалă-националисла организацисен те, тата, уйрăмăн илсе каласан, Украинăри национал-фашисла организацин те пĕрлехи пĕтĕмĕшлĕ позицийĕ пулнă.

Ку ĕнтĕ Совет Сойузĕн оборонă тĕрекне çĕмĕрессине, çарпа оборонă промышленнăçĕнче сăтарлă ĕç туса пырассине, вăрçă пулас мĕн пулсан фронта уçса парассине тата провокаци туса çав вăрçа кăларассине пĕлтернĕ.

Каламалли те çук, хисеплĕ задачăсем!

Çак преступлениле тĕллевсен ĕречĕ хăйех те ĕнтĕ вăл блока, вăл блок хăшпĕр йутçĕршыв государствисен шпионла-разведкăлă организацисен банди пулса тăнине пуçĕ-мĕнĕпех кăтартса парать.

Пире кунта Икрамов хăйне „сылтăмла-троцкисла блокăн“ пуçлăхĕсем, пуринчен малтан Бухарин, ӳкĕтлени çинчен, йутçĕршыв разведкисен чăн-чăн агентури пулса тăрас тĕлĕшпе пур мерăсене те йышăнма хĕтĕртсе ӳкĕтлени çинчен каласа пачĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блокăн“ Мускаври пуçлăхĕсем Икрамова Йапонипе Германи çине, вĕсен сăмахĕпе каласан, „орийентаци“ тытни çинчен, нимĕçсемпе тата йапонцăсемпе çыхăну тытни çинчен пĕлтернĕ. Мĕн йачĕпе-ха ку çыхăну? Гринькопа Крестинский пит те уççăн кăтартса панă задачă йачĕпех.

Иккĕмĕш курнăçура сăтарлă ĕç çинчен тăракан ыйтува сӳтсе йавнă. Иккĕмĕш курнăçура Англипе çыхăну тытасси çинчен тăракан ыйту пирки калаçнă. Кун çинчен кунта айăпланакан Ходжайев пит те тĕплĕн тата туллин каларĕ.

Мĕскер каланă-ха ăна Бухарин? Вăл каланă: Англи çине орийентаци тытмала тенĕ, халăхи вăхăтра вăрçă пулмасан, чаçрах интервенци пулмасан,—пирĕн ĕç „пăчланать“ тенĕ.

Бухарин, чăннипе илсе каласан, кунта ун пирки тунмарĕ. Тепĕр айăпланаканĕ Ходжайев та çавнах çирĕплетсе пачĕ.

Йутçĕршыв разведкисемпе блок хушшинчи çав хутшăнусем мĕнле пулни çинчен чылай фактсем тăрăх, çак суд процесĕ пĕр иккĕленмеле мар палăртнă фактсем тăрăх каласма пулать.

Епĕ сире айăпланакан Рыкова допрос туни çинчен аса илтеретĕп. Белоруççире Голодед, Червйаков тата Шарангович йертсе пынипе ĕçлесе тăнă буржуалă фашисла организаци мĕнле йапала пулнă вăл, тесе ыйтсан, Рыковăн çакна йышăнмала пулчĕ: Белоруççири мĕн чухлĕ те пулин пысăкрах работниксене йертсе пымали ĕçе лартассине те малтан Польшă разведкипе килĕштерсе тунă.

Епĕ сире айăпланакан Иванов кăтартса панисене аса илтеретĕп. Вăл кунта çакна каласа пачĕ: блока хутшăннисем хăшпĕр чухне сылтăммисем ăçта ĕçленипе йутçĕршыв разведкисем ăçта ĕçленине те уйăрса тăман, çавтерийех ĕнтĕ вĕсен ĕçĕсем пĕр-пĕринпе çыхланса кайнă. Епĕ сире çавăн пекех çакна аса илтеретĕп: Иванов сăмахĕсем тăрăх, Бухарин ăна Англи разведкипе çыхăнма сĕннĕ. Çурçĕр крайĕнче Англин пит пысăк интересĕсем пур, тенĕ Бухарин. Вăл каланă: сылтăммисен центрĕн ку çĕршывпа тунă килĕшӳ, совет власне сирпĕтсе пăрахас ĕçре сылтăммисене пулăшу парасси çинчен тунă килĕшӳ пур, вăл килĕшӳре Англири вăрман промышленникĕсен Çурçĕр крайĕн вăрман хуçалăхĕнчи интересĕсене пурнăça кĕртессине палăртса хунă, тенĕ.

Иванов кăтартса пачĕ: Ăна Бухарин ĕçе çапла майăн—сылтăммисем Англи буржуазин пур тĕрлĕ економикăлă тата финанслă интересĕсене кунăçтарма хатĕрех тăнине çав буржуазине кăтартса парас майăн туса пыма сĕннĕ, пĕр йенчен, хамăра пулăшассине çухатас мар тесе, тепĕр йенчен, шанассине çухатас мар тесе, Англи буржуазине авансем парса тăма сĕннĕ.

Чăннипе илсе пăхсан, йутçĕршыв разведкисен „тӳрĕ кăмăллă“ агенчĕсемшĕн, сирĕн умра айăпланакансен тенкелĕ çинче ларакан çак пĕчĕк старик пеккисемшĕн, час-часах мĕнле хирĕçӳлĕхлĕ положенисем туха-туха тăни çинчен каланă чух, Раковский те çавăн çинченех каларĕ. Ун пек специалис мĕнле пулать иккенне Раковский хăй çавăн чухлать, вăл пĕр вăхăтрах Йапони разведкишĕн те, Англи разведкишĕн те ĕçлесе Йуреневпа пĕрле хăйсемшĕн „йавăр“ лару-тăрува лексе курнă.

Разведчикшăн йавăр положени! Англипе Йапони шпионĕшĕн йавăр положени!

Çакна майăн Бухарин çинчен калас пулать. Вăл кунта: чăннипе илсе каласан, епĕ ССР Сойузне вăрçăра çĕмĕрсе пăрахмала тăвассишĕн мар, шпионажшăн та мар, сăтарлă ĕçшĕн те мар, диверçишĕн те мар, мĕншĕн тесен епĕ ку практикăлă ĕçпе хутшăнса тăма тивĕç мар, мĕншĕн тесен епĕ пĕтĕмĕшлĕ ыйтусен проблематикипе ĕçленĕ „теоретик“, тесе кăтартса парасшăн пулчĕ.

Кун çинчен Бухарина: „Урăхла каласан, хăшпĕр йутçĕршыв государствисен пулăшувĕ çине орийентаци тытнă?“, тесе ыйтсан, вăл çапла ответ панă: „Çапла, куна ун пек калама та пулать“,—тет. Вăл тӳррĕмĕн каласшăн мар, „куна апла калама та пулать“, тет. Çавăн пек калама та пулать тата çавăн пекех калас та пулать, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс. „Урăхла каласан, ССР Сойузне вăрçăра çĕмĕрсе тăкмала тăвасси çине орийентаци тытнă?“ тесе ыйтсан, Бухарин йаланхи пекех тĕтрелĕ, пăтранчăк сăмахсемпе калать: „Пĕтĕмĕшне пĕрле илсе, тепĕр хут калатăп,—çапла“,—тет.

Бухарин Рыковпа тата Томскипе пĕрле шӳтлĕ ĕç мар, пысăк ĕç, Совет правителствипе совет власне сирпĕтсе пăрахас ĕç организациленĕ, çак ĕçре нимĕнле средствăсенчен те именсе тăман. ССР Сойузĕ ăшĕнче нимĕнле тĕрексĕр тăрса йулса, хăйсен пĕтĕм шанчăкĕсене ССР Сойузне курайман тăшманла йутçĕршыв государстви çине хурса, вĕсем фронтсене уçса парасси çинчен, совет халăхне, совет государствине пĕрле çĕмĕрсе тăкасси çинчен çав государствăпа калаçса таталнă; çакна вĕсем сутăнчăкла çулпа власа илес тесе çапла тунă, вăл власа вĕсем çав самантрах пĕтĕмĕшпех, пĕр уйăрмасăр, туллинех фашиссен аллине, хăйсен чăн-чăн хуçисен аллине памала пулнă.

Сăмахсемпе выляма çитĕ ĕнтĕ! Еквилибристикă, „философи“, таврашĕ çитĕ ĕнтĕ! Сăмах государствăна сутасси çинчен, тăшман йенне куçасси çинчен, фронтсене уçса парасси çинчен, ССР Сойузне вăрçăра çĕнтерсе тăкмала тăвасси çинчен, пирĕн тăван çĕршывăмăра аркатса тăкасси çинчен пынă.

Çак заговорта пулнă уйрăм çынсен пĕтĕм участкăсенчи пĕтĕм шпионла ĕçĕсене Бухаринпа Рыков çул кăтартса тăнă. Пур шпионла сведенисем те Рыков, Бухарин, Йагода тата вĕсемпе пĕрле ĕçленисен аллинче пулнă средствăсемпе çыхăнусем пулăшнипе, кирлĕ-кирлĕ çулсем тăрăх тивĕçлĕ органсене кайса тăнă.

Рыков, Бухарин тата Йагода чылай йутçĕршыв государствисен разведкисемпе çыхăнса тăни çакăнта судра тĕпренех, пĕтĕмĕшпех уçăлса курăнчĕ. Меншевиксемпе, Данпа, II-мĕш Интернационалпа, ес-ерсемпе, Масловпа чикĕ лешйенчи йутçĕршыв разведкисемпе пĕрле, агрессорсемпе пĕрле вĕсем Совет власне сирпĕтсе пăрахма, тепĕр хут чăн-чăн, чи усал та хаййар, çĕр процентлă капиталисăм власĕ туса хурасшăн, çĕр улпучĕсемпе фабрикантсем чăннипех пуçпулса тăмала йĕрке туса хурсшăн пулнă.

Çак пĕтĕм сăтарлă ĕççем, сутăнчăкла ĕççем йутçĕршыв разведкисене пĕрмайах çекретлă сведенисемпе тĕрлĕрен материалсем парса тăрассипе пăтрашăнса пынă. Крестинский, Розенгольц, Иванов, Шарангович, Чернов, Раковский, Йагода тата ыттисем йутçĕршыв разведкисене тăтăшăнах совет государствин çекречĕсене парса тăнă.

„Сылтăмла-троцкисла блокри“ заговорщиксем йутçĕршыв разведкисене пĕрмайах пулăшу пар-

(Малали 3-мĕш страницăра).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ

Государствă йенчен айăплаканĕн—ССР Сойуз Прокурорĕн А. Й. ВЫШИНСКИЙ йулташăн сăмахĕ

(Малалли)

са тăни çинчен пирĕн чăн-чăн тĕрĕс сведенисем пур.

Бухарин, Томский, Рыков, Йагода фронтсене уçса пама хатĕрленнĕ. Анчах унта та пĕтĕм çĕрти пекех, хăйсен пĕтĕм сутăнчăклă ĕçĕсенчи пекех, вĕсем провокаторсем пек ĕçленĕ. Ку та ĕнтĕ çавăн пекех, ăнсăртран мар, мĕншĕн тесен ку вăл çав господасен ĕç методне сутатса кăтартса парать. Вĕсем фронтсене уçса пама хатĕрленеççĕ, анчах вĕсем хамăрăн пĕтĕм çĕршыври рабочисемпе хресченсем умĕнче, хамăрăн пĕтĕм халăх умĕнче ку ĕçе çапла кăтартса парасшăн: фронта епĕр мар, тахăшĕ урăххи уçнă, епĕр пачах тепĕр майлă, фронтсене уçассине хирĕç, сутăнчăклă ĕçсене хирĕç, тесе кăтартса парасшăн пулнă: фронтсене уçакансене, хăйсемех хушнă тăрăх суда пама, çапла туса вара, Бухарин намăссăрăн каланă тăрăх, патриотла лозунгсемпе выљаса илме каварланса та пăхнă вĕсем.

Вăйăна тăрă шыв çине кăларнă. Вĕсен пичĕсем çинчен террорла маскăсене çурса пăрахнă, пĕрре тытса ĕмĕрлĕхех çурса пăрахнă. Хăйсем ССР Сойузне вăрçăра çĕнтерсе пăрахмала тăвас, ССР Сойузне татăкăн-татăкăн пайлас тĕлĕшпе преступленилле ĕçсем тунине тунма преступниксенчен пĕри те хăйаймарĕç.

ССР Сойузĕпе совет влаçне хирĕç пĕрле кĕрешесси çинчен Троцкий Германипе Йапони разведкисемпе калаçса татăлнă. Куна ĕнтĕ иртнĕ процессенче те, çак процесра та çĕнĕрен палăртнă. Ку тĕлĕшрен пирĕн çак процесра та айăпланакансенчен пĕри, уйрăмăн калаçан Бессонов, пит тĕплĕн кăтартса панисем пур.

Епĕр пĕлетпĕр, троцкиссем хăйсен икĕпитлĕх маскипе витĕнсе чылай самайах ответлă, пирĕн йутçĕршывсем тĕлĕшĕнчи политикăна практикăра пурнăçа кĕртсе пымали вырăнсене шуса кĕме пултарнă. Раковскисем, Крестинскисем, Йуреневсем тата ыттисем, Бессоновсем тата ун йеврĕлисем—вĕт вĕсем ССР Сойузĕн тулти хутшăнăвĕсенчи дипломатиле представителствин ĕçĕсене туса пыма хушнă çынсем. Çапла пулнипе ĕнтĕ вĕсен совет государствипе совет халăхĕ умĕнчи айăпĕ татах йăвăрланать, ответлăх йăвăрлăхĕ пысăкланать.

Çак господасем хăйсен ĕç вырăнĕпе лăпкă саманана çĕмĕрес ĕçре, империалиссен кăмăлĕшĕн пулма пултаракан хĕçпăшалла тытăçу провокацилесе кăларас тесе, пур мерăсене те йышăнас ĕçре уçă курнă. Çапла тунă Раковски те, Гриљко та, Крестинский те.

Килĕшӳн иккĕмĕш пункчĕ—ССР Сойузĕнчи троцкисла организацисем Германири вăрттăн тата шпионла организацисемпе, вĕсен агенчĕсемпе пур йенчен те пĕр шухăшла пулса ĕçлени. Мĕншĕн? ССР Сойузĕн çарпа хуçалăх хăвачĕпе тĕрекне çĕмĕрессишĕн, ССР Сойузне пулас вăрçăра çĕмерсе тăкассине хăвăртлатассишĕн.

Виççĕмĕш пункт—влаçа „сылтăмла-троцкисла блок" аллине илес тĕллевпе ССР Сойузĕнче переворот тумашкăн Германи фашисăмĕ вĕсене пулăшу парасси.

Таваттăмĕш—интервенцине хăвăртлатасси тата çĕнĕ правителствă влаçа илсен, унпа кĕске вăхăтрах мирлĕ килĕшӳ тăвасси,—ку ĕнтĕ çак господасем туса пынă сутăнчăклă планран тухса тăракан утăм.

Пиллĕкĕмĕш — Украинăна ССР Сойузĕнчен татса илсе Германине парасси, çавăн пекех Приморйене татса илсе Йаповине парасси, çавăн пекех Белоруççине татса илсе Полљшăна парасси, çавăн пекех уйрăм облăçсемпе республикăсене тата-тата илсе вĕсене йутçĕршыв империалисĕсен аллине парасси, çапла майпа пирĕн пĕтĕм Совет Сойузне татăкăн-татăкăн пайласа йарасси.

Бухаринăн кунта çакна йышăнмала пулчĕ: çак сойуз тенĕскере тунă условисем,—вăл пачах та сойуз мар (вăл чăннипе илсе каласан, хуçипе приказчикĕ тунă договор)—вăл условисем çаксем пулнă: ССР Сойузне татăкăн-татăкăн пайласси, ССР Сойузĕнчен Украинăна, Белоруççине, Приморйене татса илесси. Епĕ Бухаринран: „кам валљи?" тесе ыйтрăм. Вăл çапла ответ пачĕ: „Германи валљи, Йапони валљи, тата кăшт Англи валљи". Кăна Бухарин хăй йышăнчĕ, унтан вăл ниçта та кайса кĕрес çук тата унтан вăл пăрăнайас çук.

Троцкиссемпе сылтăммисем шăпах ĕнтĕ çав килĕшӳ тăрăх ĕçлесе пынă.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокра" буржуалла-национа-лисла ушкăнсем паллă вырăн йышăнса тăнă. Вĕсем хăшпĕр нацилĕ республикăсенче çав йутçĕршыв разведкисен агентурисен влийанийĕ тăрăх тата „сылтăмла-троцкисла блок" центрĕ тенĕскер тӳррĕмех йертсе пынипе пулса тăнă.

Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Гриљко, Ходжайев, Шарангович, Икрамов,—вĕсем тĕрлĕ тĕслĕ чи усал та хăйар, ирсĕр ĕçре пиçсе тухнă контрреволюционерсем, вĕсен контрреволюцилĕ стажĕ пысăк, вăл боротбиссенчен, „Милли Истикљалран", „Милли Иттихадран" пуçласа „сылтăмла-троцкисла блок" патне çитийех пырать.

Рыков Ходжайева: сылтăммисем йертсе пынипе националисла организаци Узбек Республики „никама пăхăнса тăмала маррине" туса çитерме пултарать,—тесе ĕнентернĕ.

Рыковпа пĕрле Бухарин та çак майăнах ĕçлесе пынă, вăл, Ходжайев сăмахĕсем тăрăх, Германи фашисăмне мухтанă, Германине Йевропă гегемонĕ туса хурас тĕлĕшпе халљ Германи фашисăмĕ пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлет тенĕ, ССР Сойузне хирĕç кĕрешмешкĕн Йапонипе Германи хушшинче килĕшӳ пулма пултарать, тенĕ.

Бухарин Ходжайева кунта пире Ходжайев кăтартса панă курбашсем урлă Англи разведки патне çул-йĕрсем тупма ӳкĕтлесе каланă. Бухарин Англири ушкăнсемпе çыхăнма, Англине мĕн те пулин пама пулма сĕннĕ. Вăл каланă: „Узбекистан пилĕк мĕлйунлă халăхпа икĕ калама çук пысăк государствă хушшинче: пĕр йенчен—Совет Сойузĕ, тепĕр йенчен—Англи хушшинче тăрса никама пăхăнса тăман государствă пулма пултараймасть. Хăш çыран хĕррине те пулсан çыпçăнас пулать", тенĕ. Вара Бухарин Ходжайева, хăй тĕллĕнех те çителĕклĕ хатĕрленсе çитнĕскере, буржуалă контрреволюци çыранĕ çумне пырса çыпçăнма тĕкет.

Бухарин Икрамова та çакăн пекех вĕрентсе хатĕрлет, Икрамовăн çавăрне пурне чиксе пама ахаљ те хăрушă. Бухарин Ленин çинчен суйнă, вăл, колонилĕ çĕршывсем ССР Сойузĕнчи пролетариат пулăшнипе социалисăм патне çитме пултараймаççĕ, тенĕ.

Сылтăмла-троцкисла тата буржуалă-националисла сутăнчăксем хăйсен капиталисăмла хуçисене кăмăл тăвас шутпа, ĕлĕк царисăм, улпутсемпе капиталисăм пусмăрласа пурăннă, социалисăмла аслă револљуци ирĕке кăларнă пирĕн тăванлă сойузлă республикăсен халăхĕсене капиталиссен пусмăрĕ айне çĕнĕрен тăварасшăн пулнă. Ленинла-Сталинла наци политикине пурнăçланипе калама çук çӳле çĕкленнĕ, културăпа-политикă тата економикă чечекленӳвĕ тĕлĕшĕнчен калама çук çӳле çĕкленнĕ халăхсене чуралăх айне тăвас пирки хăйсен предателле планĕсем çинчен уççăн калама хăймасăр, — çак предателсем вăл республикăсем никама пăхăнса тăрас марри çинчен калакан хăйсен сутăнчăклă, суйă, ултавлă лозунгĕсемпе, сăмахĕсемпе ĕçлеме хăтланнă.

Нацисем чăннипех никама пăхăнмасăр пурăнассине, пĕтĕмĕш тата чăн-чăн нацилĕ културăна, халăхсен мĕлйунлă массисен чăнчăн чечекленӳне пурнăçа кĕртнĕ çĕршыв ССР Сойузĕсĕр пуçне тĕнчере урăх пур пек калаçнă.

Ун пек çĕршыв, ССР Сойузĕсĕр пуçне, пĕтĕм тĕнчипе те урăх çук. Капиталисăмла çĕршывсен колонийĕсенче—Индире, Алжирта, Тунисра, Мароккăра, çавăн пекех хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче, халăхсем капиталиссен йăвăр пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăннă вăхăтра, унта çуклăхпа чухăнлăх, массăсем выçăпа вилсе пĕтесси ытларан ытларах ӳссе пынă вăхăтра, унта сифилис, туберкулљоз саралса пынă вăхăтра, унта йухăнса пĕтессипе пауперизаци ытларан ытларах вăйланса пынă вăхăтра,—ССР Сойузĕнче, унăн мухтавлă вунпĕр республикинче массăсен материаллă ырлăхĕ ытларан ытларах ӳссе пырать, формипе нацилĕ, ăшчикĕпе социалисăмла културă çӳлĕрен çӳлерех çĕкленсе пырать, вăл республикăсен пуйан, куçпа çавăрса илейми анлă та ирĕк çĕрĕсем çийĕн йалкăшакан социалисăмла çĕнĕ хĕвел—халăхсен тăванлă никам çĕмĕрейми сойузĕн — Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн тĕксĕмленми мухтавĕпе чапĕн хĕвелĕ хăйĕн аслă ырлăхлă çутă пайăркисемпе тата хавасланрах, тата уççăнрах сутăтса тăрать.

Сăтăрçăсем, диверсантсем

Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннисен çак шайкки халиччен паллă пулса тăракан пĕр хут çеç мар судпă уçса палăртнă преступлениле методсемпе ĕçленĕ: сăтăрла ĕç, диверси, шпионаж, террор меточĕсемпе. Сăтăрçăсем, диверсантсем, шпионсем чылай отраслĕсене шăвăнса кĕнĕ, тата унта йертсе пырас ĕçе йышăннă. Пысăк ĕçре—Сойузăн Çĕрĕç халăх комиссарĕнче ларнă Черновпа та çапла пулнă, пысăк ĕçре—ССР Сойузĕн Финанс халăх комиссарĕнче ларнă Гриљкопа та çапла пулнă, пысăк ĕçре—ССР Сойузĕн Тулти суту-илӳ халăх комиссарĕнче ларнă Розенголљцпа та çапла пулнă, Центросойуз председателĕнче ларнă Зеленскипе те çапла пулнă, ытти çĕрте те çаплах пулнă. Паллах, вăл преступниксен аллинче маскăпа витĕнсе ĕçлемели чи анлă майсем, сăтăрла ĕçĕнчи хăрушла майсем пулнă. Ун пек майсем преступниксен аллисенче сайра-хутра кăна пулма пултараççĕ.

Хăйĕн тĕп тĕллевне—совет влаçне сирпĕтсе антарассине йĕрлесе, „сылтăмла-троцкисла блок" массăсем совет органĕсене шанса тăнине çĕмĕрес тесе, халăхсем советсем çине тарăхассипе сарас тесе, тата май килнĕ таран, халăха совет влаçне хирĕç çĕклес тесе чи йĕрĕнчĕк те, чи хăйар методсем умĕнче те чарăнса тăма шутламан.

Кашни айăпланакан хăй ĕçленĕ çĕрте туса пынă çак провокацилĕ ĕç пысăкран та пысăк пĕтĕмĕшле-политикăла хăрушлăх пулса тăрать. Ун çинчен, пуринчен ытла çакнашкал ĕçсем, сăмахран, кунта судра асăннă Лепелљри ĕç: чинсăрлăх тата саккунсене пăсни ĕнентерсе пăраççĕ, çавсене заговоршчиксемпе преступниксем çак блок кăтартувĕ тăрăх пурнăçа кĕртсе пынă, халăхсен анлă массисен ку çĕ умĕнчех вĕсем çине тивĕççĕр йат ӳкерес майпа туса пынă. Финанс йенĕпе сăтăрçăсен тĕп кăтартувĕ,—Рыков Бухаринпа килĕшсе каласа панă пек,—„Совет правителствине совет тенкипе çапасси" пулнă. Ку вăл ватă троцкисăн лозунгне, кунччен малтанхи процессем тăрăх Пйатаков урлă паллă пулса тăракан лозунга—„сисĕмлĕрех вырăнсене сисĕмлĕрех средствăсемпе çапас" теннине урăх сăмахсемпе калани çеç пулать.

„Совет правителствине совет тенкипе çапас"—акă ĕнтĕ Гриљкон, финанс халăх комиссарĕ пулнăскерĕн çав хушăрах тата Германипе Полљшă разведкисен агенчĕ пулса ĕçленĕскерĕн тата Бухаринпа Рыковăн çывăх йулташĕ пулнăскерĕн пĕтĕм ĕçне кăтартса паракан директивă. Çак директивăна ĕнтĕ, „блокăн" çак решенине вăл çынран хăранипе мар, хăй кăмăлĕпе (çĕрсе кайнă кăмăлĕпе пулин те) пурнăçа кĕртме тăрăшнă.

Гриљкора епĕр совет влаçĕн ватă та хăйар тăшмăнне, йăлтах та пĕтĕмĕшпех нимĕç разведкине сутăннăскерне, капиталисăма кайала тăварассишĕн совет влаçне хирĕç сăтăрла ĕç туса, диверçиле ĕç туса, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнса, террорла ĕç туса активлăн кĕрешекене куратпăр.

Илĕр тепĕр разведчика—Чернова, паллах „талантлă етеме", мĕншĕн тесен вăл пĕр каçрах Кибрикпа Дан патĕнче пулма, полицейскисемпе çапăçма, полицей президиума лекме тата нимĕç разведчикĕ пулма ĕлкĕрнĕ.

Кунта пулма пултарайманни, çапах та, нимĕн те çук. Пурнăçра Чернов йышши çынсемпе, çавăн пек пулать те ĕнтĕ. Халĕ вăл самайах сыввăн та чĕррĕн курăнать. Хупса усрани ăна чылайах пулăшнă. Ирĕкре чухне унăн сăнĕ-сăпачĕ урăхларах пулнă, ĕçлессинчен ытла ĕçнĕ тата ĕçке путнă çынан сăн-сăпачĕ пек пулнă, вăл социаллă чирпе—алкоголисăмпа чирленĕ çын пулнă. Çапла, правителствă хушнипе вăл йутçĕршыва кайнă. Анчах, çав вăхăтрах, вăл хăйĕн çине „блок" хушувĕсене илсе кайать, „блок" ăна Данпа çыхăнассине организацилес тĕлĕшпе вăл ăнсартран командировка кайнипе усă курать. Вăл Данпа Кибрик патне лекет, Данпа Кибрик—ку паллах—нимĕç разведчикĕсем. Ку çавăнтан та курăнать, вăл Данпа тата Кибрикпа калаçни çийĕнчех полицей-президиум разведкине паллă пулнă. Кайасса вăл правителствă хушса йанă ĕçпе кайнă, анчах та тискер меншевиксемпе — Данпа, Кибрикпа çыхăннă, вăл вĕсемпе пăшăлтатса калаçнă. Çакă вăл Черновшăн политикăла карйерă çеç пулса тăмасть, çакăнпа тата нимĕç разведки те усă курать. Чернов пирки Рыков та çапла калать: Чернов пĕр каçрах полицей президиумĕнче те тата разведчик пулма та ĕлкĕрнĕ.

Акă ĕнтĕ Чернов нимĕç разведкин заданийĕ тăрăх ĕçлет, тӳрех çапла калать вăл: „нимĕç разведки пуринчен ытла лашасем ĕрчтес йенĕпе сăтăрла ĕç тума ыйтрĕ. Мĕншĕн тесен, Райвид каланă пек, Хĕрлĕ Çара лашасем памала ан пултăр.

Паллах, çакпа пысăк ĕçре пулнă çын тумасăр, Чернов пек çын тумасăр кам тума пултартăр-ха урăх? Сикекен хăрушă чир препарачĕсене туса кăларма йатарласах фабриксене организацилеме тата кам пултартăр-ха? Вăл кăна. Вăл ăна пурнăçа кĕртсе пынă. Кунта вăл хăйех каласа пачĕ: унăн заданийĕ тăрăх 25 пин лаша вĕлернĕ. Çакăн пек крайсенче, сăмахран, Çĕпĕрте, лашасене питĕ нумай вĕлернĕ. Сăтăрçăсем сыснасене йурийех рожă тата чума чирпе чирлеттернĕ. Ăна Воронеж облăçĕнче те, Азовпа Хуратинĕç крайĕсенче те тата Ленинград облăçĕнче те тунă.

Розенголљц та нимĕçсемпе йапонцăсен интересĕсем ыйтнă май ĕçлет. Вăл çав йутçĕршыв государствисен интересĕсемшĕн йатарласах нефть тăратас тĕлĕшпе договор туса çирĕплетет. Вăл çав государствăсен интересĕсемшĕнех хăйĕн тăван çĕршывĕн интересĕсене тӳррĕн пăсса, ылттăн дохочĕн експортне йурийех сăтăрла организацилет. Вăл Йапонийе чукун сутса сăтăрла тата преступлениле ĕç тăвать. Çав чукун Йапони войенщчини валљи снарйадсем тума кайтăр тенĕ вăл, Йапони войенщчини вара вĕсемпе, пирĕн çине бомбăсем пăрахма мăр пулсан, вара пирĕн тăван çĕршыва хăратма хатĕрленет пулас. Оборонăна кирлĕ хатĕрсене йутçĕршывсенчен илсе килессине пур майсемпе те чарса тăнă вăл. Вăл, хăй пысăк ĕçре ларнипе усă курса, предателле суйса улталаса, хăйĕн государствă умĕнчи тивĕçне тăшмана сутса, хăйне разведкă мĕнле хушнă, çавăн пек ĕçлесе пынă.

Икрамов Ходжайевпа пĕрле сăтăрла ĕçре хăйсен центарти „коллегесенчен" йулман. Кунта вăл Намангавра тунă сăтăрла ĕç çинчен, пурçăн фабрикĕнче тунă сăтăрла ĕç çинчен, çĕр мамăкне тасатмали заводсенче, çĕр мамăк хуçалăхне организацилес çĕрте тунă сăтăрла ĕç çинчен хăйех кăтартса пачĕ. Вĕсем кăтартса панисем тăрăх, çак сăтăрла çĕмĕрсе аркатмала ĕçе организацилессинче Рыковпа Бухарин мĕн вырăн йышăнни уççăнах паларса тăнă—кăна йертсе пырас вырăн тесе калама пулать.

Зеленский. Кунта епĕ çак намăсла практикă çине, апат çимĕç продуктисем ăшне кантăк ванчăкĕсем тата пăтасем пăрахас практика çине çеç кăтартса паратăп. Ку вăл пирĕн халăхсен чи çивĕч интересĕсене, вĕсен сывлăхĕпе пурнăçĕн интересĕсене сийен кӳнĕ. Çу ăшĕнче кантăк ванчăкĕсемпе пăтасем! Çакă ĕнтĕ тĕлĕнмелле хăрушă преступлени, вăл, ман шутпа, ытти çавăн йеврĕлĕ преступленисене пурне те кайа хăварать.

Пирĕн çĕршывра, пур ресурссемпе те пуйан пулса тăракан çĕршывра, мĕнле те пулин продукт çителĕксĕр пулни вăл пулман та тата пулма та пултараймасть. Çавăнпа та ĕнтĕ çак мĕн пур сăтăрла организацин задачĕ—пирĕн ытлашшипех апат-çимĕç продуктисене дефицитлă тăвасси, рынсенче халăхсене кирлĕ çимĕçсене сахаллатасси пулнă. Ку тĕлĕшпе Зеленскин ĕçĕнчи пĕр епизода çеç—50 вагон çăмарта тĕлĕшпе пулнă историйе çеç астутаратăп. Зеленский, Мускав хулине çав питех те кирлĕ çимĕç продуктисĕр тăратса хăварас тесе, 50 вагон çăмартана йурийех пĕтерсе тăкнă.

Сăтăрлă ĕçе организацилесе, çав пур Рыковсемпе Бухаринсем, Йагодасемпе Гриљкосем, Розенголљцсемпе Черновсем тата ыт. те, т. ыт. те ку йенпе пĕр тĕллеве—выçлăхăн шамăлă аллипе социалисăмла револљуцине пĕтерсе хума тытăнас тĕллеве тытнă. Ăна тăвасси пулаймарĕ тата нихăçан та пулас çук.

Шарангович лашасем хушшинче анеми чирне сарнă—30 пин лаша ӳксе вилнĕ. Шарангович торф промышленнăçне çĕмĕрнĕ. Шарангович йурийех Белоруççири халăхсем хушшинче нациле кураймалăха, нациле шухăшсене акнă.

Иванов заводсене ишĕлтернĕ, целлулозăпа хут промышленнăçне ишĕлтернĕ, анчах та ăна вăл сыхланса, çавăрăнса пăхкаласа, Англи хуçисен интересĕсене ытлашши пăсас мар, тесе ĕçленĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок" вĕсене вăрман хуçалăхне пама шутланă тата унта вĕсем хăйсен вăйĕсем çитнĕ таран тата май пур таран ĕçлеччĕр, тенĕ.

Кун çумне тата Совет влаçне хирĕç турренех те уççăнах хĕçпăшалла выступлени организацилесси хутшăнать. Бухарин Рыковпа пĕрле Слепкова Çурçĕр Кавказа йарать, Йаковенкона—Çĕпĕре, унта вара вĕсем повстанчески йухăм кăларса йараççĕ, йутçĕршывсенчи казаксен шургвардири етеммисемпе çыхăнаççĕ, Çурçĕр Кавказра казаксен десантне хатĕрлеççĕ. Рыков Зубаревпа пĕрлĕ Уралра повстанчески отрйадсем организацилет. Икрамов Ходжайевпа пĕрле, Бухарин, Рыков тата ыттисем йертсе пынипе, Вăтам Азире мулласенчен, байсенчен тата пур йышши пăсăлнă елементсенчен повстанчески отрйадсем организацилет. Иванов та, Бухарин тӳррĕмĕн хушнипе, Çурçĕр крайĕнче ссылкăна йанă кулаксенчен повстанчески отрйадсем организацилес тĕлĕшпе ĕçлет,—çапла тунипе пулљ ĕнтĕ Бухарин, кулаксене „социалисăма куçма" май парасшăн пулнă пулас.

Совет государствин дейателĕсене С. М. Кирова, В. Р. Менжинскине, В. В. Куйбышева, А. М. Горькине вĕлерни

Епĕ халљ тепĕр раздел çине—айăпланакансен террорла ĕçĕ çине тата вĕсем малтанах шутласа хурса совет государствин дейателĕсене: С. М. Кирова, В. Р. Менжинскине, В. В. Куйбышева, А. М. Горькине вĕлерни çине куçатăп.

Çака вăл процесăн чи пысăк ирсĕрлĕхĕсенчен тата чи пысăк йăвăрлăхĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Мĕнле сăлтавларĕ-ха Рыков хăйĕн вăрттăнла ушкăнĕ террорла ĕç çине куçнине? Питĕ те уççăн. Вăл çапла каласа пачĕ: „Сылтăмрисен контрреволљуциле организацийĕ вăрттăн заговорла организаци пулнă май, контрреволљуциле ĕçсене тума унăн нимĕнле массăла никĕс те çук пирки, мĕнле те пулин урăх майпа влаçа илме шанчăк çук пирки—террор тума йышăнни, центр шухăшĕпе, малашлăх уçса панă":

Рыковăн тата ытти сылтăмла-троцкисла фашисла заговорщиксем çавăн пек кăтартса панисенчен вилĕм çивви тата вилĕ шăрши кĕрет.

Бухарин та терроршăнах тăнă, анчах, хăй каласа панă тăрăх, террор мар, массăлă восстанисем тăвасшăн пулнă вăл. Ну, вăл унта мĕн тăвасшăн пулнă, ку вăл унăн ăнлантарса парасси пулса тăрать, анчах та епĕр пĕлетпĕр, вăл тахçанах — кăна халљ пĕтĕмĕшпех палăртса çирĕплетнĕ тесе шутлама пулать,—1918 çултах террорла актсем те, Каплана та, „сулахай" ес-ерсене те, троцкиссене те, сылтăм ес-ерсене те организацилес çĕрте хутшăнса ĕçленĕ. Унтан 1932 çулта вăл ес-ер пулнăскерпе—Семеновпа, террорла актсене организацилекеннипе тата ес-ерсен дружинĕсене йертсе пыраканнипе калаçнă, Сталин йулташа хирĕç тата Каганович йулташа хирĕç террорла кĕрешӳве организацилесси çинчен калаçнă. Çакна вăл хăй те тулли саçăпах каласа парать. 1932 çулта Бухарин Пйатаковпа Седов урлă террор çине куçмали условийе директивĕ çинчен калаçать, ăна вăл Троцкин установки тет. Заговорла блок террорла ушкăнсем организацилессине анлăн сарса туса пынă, çав ушкăнсем террорла актсене, Кирова вĕлерессине практикăра пурнăçа кĕртессине хатĕрленĕ. Кирова вĕлернине кун уменхи процесра пĕтĕмĕшпех шыраса тупса тăрă шыв çине кăларнă, анчах та халљ кăна тупса палăртнă тăрăх, троцкисла-зиновйевла центрăн, Сергей Миронович Кирова вĕлерекенскерĕн ĕçĕ, хăй тĕллĕн пулнăскер пулман. Халĕ тупса палăртнă ĕнтĕ: Кирова çак „сылтăмла-троцкисла блок" йышăнни тăрăх, ăна центрсенчен те центрĕ тесе калама йурать, йышăннă тăрăх вĕлернĕ.

Айăпланакан Йагода судра çапла çирĕплетрĕ: Кирова „сылтăмла-троцкисла блокăн" тӳрĕмменех йышăннă решенийĕ тăрăх вĕлернĕ, ку решенине Йагода пурнăçа кертнĕ, çак намăслă та хăрушă ĕçе ун çине хуна пулнă.

Йагода судра: çак решенине йышăннă çĕрте Рыковпа Бухарин та хутшăнса ĕçленĕ, тесе çирĕплетрĕ; Рыковпа Йенукидзе С. М. Кирова вĕлерес ыйтува сӳтсе-йавнă канашлура хутшăнса ĕçленĕ, çапла вара Рыковпа Йенукидзе Сергей Миронович Кирова вĕлерессии çинчен тăнă ыйтува сӳтсе-йавнă çĕрте тӳрременех хутшăнса ĕçленĕ,—тесе çирĕплетрĕ. Манăн: Бухаринпа Рыков вĕсем Кирова вĕлерни çинчен пĕлмен тесе кунта тĕрĕссине калаççĕ-и, тесе тӳррĕн панă ыйтува ответлесе, Йагода çапла пĕлтерчĕ: ку пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен, Йенукидзе „сылтăмла-троцкисла блок" пĕрлехи ларура Кирова вĕлерессии çинчен йышăннине каласа парсан,—вăл, Йагода, хăшпĕр „тактикăлă" конспиративла шухăшсемпе çав решенирен пăрăннă, анчах та çакă вăл—мĕнле те пулин заговорщиксен партизанла пĕчĕк ушкăнĕ йышăннă на решенийĕсене пулнине, çав решени „сылтăмла-троцкисла блокран" тухнăскерех, вăл решенине йышăннă çĕрте Бухаринпа Рыков активлăн хутшăнса ĕçленĕ иккенне Йагода пĕлсе тăнă.

Халĕ питĕ те тĕплĕн тупса палăртнă: Йагода çывăххăн хутшăннипе Кирова вĕлернĕ пулнă. Çавăн пекех тата Кирова Рыковпа Бухарин çывăххăн хутшăнса вĕлернине те тупса палăртнă тесе шутлатăп епĕ.

Анчах тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă сылтăмла-троцкиссен тата заговорщиксен ĕçĕ, ăна суд следствипе тупса палăртнă, Кирова вĕлернипех чарăнмасть.

Следствипе тупса палăртнă: Алексей Максимович Горькийе, Вйачеслав Рудолљфович Менжинскине тата Валериан Владимирович Куйбышева, çак „сылтăмла-троцкисла блок" заданийĕ тăрăхах вĕлернĕ. А. М. Горькин ывалне—М. Пешкова та çавăн тăрăхах вĕлернĕ.

Ку ыйту тĕлĕшпе Йагода çакăн пек кăтартса пачĕ:

„Епĕ татăклăнах çапла калатăп: Кирова „сылтăмла-троцкисла блок" центрĕн решенийĕ тăрăх вĕлернĕ. Çак центрăн решенийĕ тăрăхах террорла актсем туса Куйбышева, Менжинскине тата Горькине тискеррĕн вĕлернĕ",—терĕ.

Çакна ыттисем те—вĕлернĕ çĕрте тӳррĕмĕн хутшăнса ĕçленисем те çирĕплетрĕç. Çынвĕлеренсен шефĕн—Йагодăн ирсĕр шухăшĕсене чи тискер те чи хăрушă майсемпе пурнăçа кĕртнĕ. Йагода малтан хăй Максим Алексейевич Пешкова вĕлерес ĕçе организациленĕ çĕрте хутшăнса ĕçлемен, тесе тунма хăтланчĕ. Кайран вăл çакна судăн хупă ларувĕнче йышăнчĕ. Вăл малтанхи следствире кăтартнисене, ăна суд следствин протоколĕсем çине çырса хунă, пĕтĕмĕшпех йышăнчĕ, вăл хăй Максим Пешкова вĕлерессине организациленине çирĕплетрĕ, вăл çав вĕлернин сăлтавĕсем йăлтах пĕр хамран çеç килнĕ, çавăнпа та ун çинчен каласа парасшăн мар пулнă епĕ, тесе ăнлантарса пачĕ.

Вăл çапла калать: ку ыйту тĕлĕшпе центр йатарласах решени йышăннă. Вăл решени çинчен ăна Йенукидзе пĕлтернĕ. Çак ĕçре врачсене йăвăçтарнă, çапла тунипе ĕçе тăрă шыв çине кăларма йăвăр пулса тăнă.

Епĕр куратпăр ĕнтĕ, Йагода вăл—ахаљ çынвĕлерен çеç мар. Çакă вăл—тупса палăртса тăрă шыв çине кăларма çав тери йăвăр çынвĕлерен. Анчах та унăн шухăшласа ĕмĕтленнисем тӳрре тухаймарĕç. Унăн шанни çĕрĕк йапала пулнă, вăл арканчĕ. Йагодана тата унăн преступлениле ĕçне тăрă шыв çине кăларнă, вĕсене тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Йагода Совет государствине тата пирĕн револљуцине хирĕç организациленĕ предателле разведкă мар тупса тăрă шыв çине кăларнă, вĕсене чăн-чăн болљшевикла разведка, Сталинăн чи лайăх соратникĕсенчен пĕри—Николай Иванович Йежов йертсе пыракан разведкă тупса тăрă шыв çине кăларнă.

Йенукидзепе Йагода иккĕшĕ пĕрле: Йагода хăй шыраса тупнă май мĕнле тусан Менжинскине та та вĕсем вĕлерме суйласа илнĕ çынсене леш тĕнчене ăсатма лайăхрах пулĕ-ши,—тесе калаçнă. Йагода хăйĕн чейе шухăшне туртса та кăларать: чирлесен, вăл каланă пек, чĕрĕлмеле мар, вилмеле тумала, йе тата вăл судра каларĕ: „Максим Пешков чирлениччен епĕ хама айăплă тесе йышăнатăп",—терĕ.

Çынсене чи усал та чи тискер майсемпе вĕлерес техникă тĕлĕшпе Йагода çӳлти вырăнта тăнă. Вăл бандитла „ăслăлăхăн" йулашки çитĕнӳвĕ пулса тăнă, вăл ытти чылай преступниксенчен те, вĕсем Йагодан çак инçене та тарăна кĕрсе пыракан преступлениле шухăшăсене ăнланман, иртсе кайнă.

(Йулашши 4-мĕш страницăра).

А. Й. ВЫШИНСКИЙ йулташ сăмахĕн йулашки

„Йенукидзе контактлă центрăн Кирова вĕлересси пирки йышăннă решенине пĕлтерсен, епĕ вăл хăрушă ĕç иккенне палăртрăм,—тет Йагода, — тӳрех терророла ĕçсем туни мана çеç мар, пĕтĕм организацине тĕп тума пултарат. Епĕ Йенукидзене хăрушăмартарах меслет çине кăтартса патăм, ăна, Йенукидзене, тухтăрсем урлă Менжинскине вĕлерни çинчен аса илтертĕм. Йенукидзе çапла каларĕ: Кирова вĕлерес ĕçе мĕнле палăртса хунă, çаван пекех туса иртерĕç, вăл ĕçе троцкиссемпе зиновйевцăсем хăйсем çине илнĕ, пирĕн ĕç — вĕсене чăрмантармасăр тăрасси.

Хăрушăсăр меслетпе тухтăрсем урлă вĕлересси пирки Йенукидзе çапла каларĕ: партипе правителствă руководителĕсенчен кама чи малтан вăл меслетпе вĕлерессипирки центр çитес вăхăтрах сӳтсе йавĕ, терĕ".

Çакăн пек вĕçĕмсĕр ирсĕрленсе, чĕйен усал ĕçсем тăвас тĕлĕшпе тата маларах кайма çук ĕнтĕ, çак çынсем, хăйсене тăрă шыв çине кăларасран хăтăлас шутпа, партипе правителствă руководителĕсенчен кама тата мĕнле майпа вĕлерсен аванрах пуласси çинчен пĕр мухтанмасăр, тискер лапкăлăхпа калаçнă.

Малала Йагода çапла каланă:

„Каштах вăхăт иртсен, Йенукидзепе тепĕр хут тĕл пулсан, вăл мана центр Политбӳро членĕсене тата уйрăмăн Максим Горькине хирĕç терророла ĕçсем тума тытăнасси пирки йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Йенукидзе мана çакна ăнлантарса пачĕ: çитес çывăх вăхăтрах пирĕн умра Совет влаçне вăйпа сирпĕтес задача тăнине шута илсе, „сылтăмла-троцкисла блок" çак пирĕн ĕçре Горький хăрушлăх кӳме пултаракан çын пулса тăнине курат, Горький—Сталинла руководства майла пĕр иккĕленмен çирĕп çын, паллах ĕнтĕ, заговор тăрăх шутланине пурнăçа кĕртсен, вăл пире, заговорщиксене, хирĕç кĕрешме хăйĕн сасине çĕклĕ".

Блок Алексей Максимович Горькине вĕлерме татăкланах йышăнна ыйтăва акă мĕншĕн лартнă ĕнтĕ.

Вĕлерес пирки йышăннă тепĕр решени Ленинла-Сталинла Политбюровăн активлă членĕсенчен пĕрне—Валериан Владимирович Куйбышева тивнĕ.

Çапла вара, кĕске вăхăтрах виçĕ çын, „сылтăмла-троцкисла блок" йышăннипе виçĕ чаплă çын вăхăтсăр çĕре кĕчĕç. Пирĕн çĕршыва виçĕ лайăх çынĕ, тăван çĕршыва парăннă ывăлĕсем сутăнчăксен намăсла заговорне пула вилчĕç. Вĕсем хушшинче—вырăссен тата тĕнчери литературăн мухтавлăхĕ—вырăссен аслă писателе, генийлĕ художник Алексей Максимович Горький.

Унăн йуррисемпе халапĕсенче, повеçĕсемпе романĕсенче кашни йĕрке ырлăхпа, револуцие ĕçсен хĕрӳлĕхĕне сывлат. Ахалĕтен мар вăл хăйĕн пурнăçне ĕмĕрлĕхе аслă Ленинпа, аслă Сталинпа, вĕсен чи çывăх тусĕ пулса, çыхăнтарчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Ленин темиçе хутчен те çапла çырнă: Горький—художествăлă пысăк талант, вăл пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери йухăмне нумай усă кӳнĕ тата кӳрет те.

Ахаль мар ĕнте Ленин: Горький, паллах ĕнтĕ, хăйĕн художествăлă аслă произведенийĕсемпе Российăри тата пĕтĕм тĕнчери рабочи класпа хăйне çирĕп çыхăнтарнă, вăл пролетарилĕ исскуствăн пысăкран та пысăк представителĕ, тесе çырнă. Горький пулас тавала сиснĕ, вăл пирĕн йухăм çĕнтерессе, капиталисăмăн пăч теттĕмлĕхĕпе ирсĕрлĕхне пролетариатăн çутă ăстăнлăхĕ çĕнтерессе малтанах пĕлсе каланă.

Сутăнчăксем аслă çынăн сывмар чĕрине çапнипе ĕççынни етемлĕхĕн тусĕсенчен чи лайăххи вилчĕ, етемлĕх ăстăнлăхĕн тата етемлĕх илемĕн чи çутă, чи вăйлă çутатаканĕсенчен пĕри сӳнсе ларчĕ. Ăна çаксем, тăван çĕршыва сутакансем, вăт çаксем, етем йĕвĕрлĕ тискер кайăксем, аслă çынăн хĕрӳлĕ, ырă чĕрине сутăнчăкла, ним хумханмасăр ĕмĕрлĕхе чарса лартса, сӳнтерчĕç.

Халĕ ĕнтĕ пурне те уççа палăртнă. Халĕ ĕнтĕ мĕнле майпа вĕлерни çеç мар, мĕн сăлтавпа тата камсем вĕлерни те паллă. Бессонов калат:—1934 çулта Парижре Троцкипе тĕлпулсан,— вăл Горькине йаланах хытă курайман, Горький те пĕтĕм тĕнчери шпионажа тата сутăнчăксен обербандитне Троцкине курайман,—унчухне Троцки çапла каларĕ:—кирек мĕнле пулсан та, Горькине кăтертес пулат, Горький Сталинăн çывăх тусĕ, партин тĕп çул-йĕрне пурнăçа кĕртсе пыракан пулса тăнипе пит те паллă, тет.

Троцкий Бессонова тӳрех тумали ĕç хушнă, ун çинчен вăл Пйатакова каласа пама хушнă. Бессонов калана тăрăх, вăл ĕçе тума çирĕппĕн каласа хăварнă: кирек те мĕнле пулсан та, Горькине пĕтермеле. Халăх тăшманĕ, обер-бандит Троцкий хушни çинчен Бессонов кунта, ССР Союзне килсе Пйатакова, блока пĕлтернĕ, Йагода каласа пана тăрăх,—ăна епĕ малашне кăтартса парăп,—блок А. М. Горькине вĕлерме решени йышăннă.

Вăл питех те тĕлĕнмеле ĕнтĕ, çавăнпа та епĕ çакăн пирки уйрămăнах, йатарласа чарăнса тăма кирлĕ тесе шутлатăп.

Епĕ кунта лартас текен пĕррремĕш ыйту çака пулат: çак ĕçе Рыковпа Бухарин хутшăнман-и, çакăн пек тĕлĕнмеле ĕç тума хатĕрленни çинчен вĕсем пĕлнĕ-и? Ку ыйту çине епĕ пĕр иккĕленмесĕрех çирĕп ответлетĕп: çапла, пĕлнĕ, çапла хутшăнна. Епĕ никам каланипе те, сăмахран Йагода каланипе те, усă курасшăн мар,—епĕ çаксемпе усă курăп: 1) Рыковпа Бухарин хăйсем каланипе, тата 2) логикă тĕкеннипе. Мĕнле-ха кунта ĕç тăрат? Есĕр пахар-ха, ку тĕлĕшпе Рыков мĕн калат. Рыков хăй заговорла блокăн активлă организаторĕпе, вăл блокра активлă ĕçлекен Йенукидзепе калаçни пулнă, тесе кăтартса пачĕ. Вĕлерес ĕçе иеркелессинче вăл мĕн тери активла хутшăнса ĕçлессине Максимов-Диковский каласа пани аван кăтартат. Валериан Владимирович Куйбышева вĕлерессине мĕнле майпа лайăхрах пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Йенукидзе пĕр хут кăна мар хăй патне чĕнсе кĕртсе кăтартусем панă. Йенукидзе çак тĕлĕшпе Йагодапа пĕрле „ĕçленĕ". Çак Йенукидзепе Рыков калаçат. Мĕн çинчен? Рыков хăй мĕн калани çеç илер:

„Мана Йенукидзе троцкиссемпе зиновйевецсем Горькинĕн вилнипе хытă сараласа пынишăн, вăл Сталинпа калама çук çывăх тăнăшăн, партин çулĕйĕре майлă тăнăшăн хытă тăрăхни çинчен пĕлтерчĕ". Ку ĕнтĕ вăл—Бессонов 1937 çулта Троцкинчен илтсе, ăна 1934 çулта кĕркунне кунта илсе килсе блокан руководителĕсене, пуçлăхĕсене каласа панинех.

Епĕ çак фактсене палтах тупса палăртнă тесе шутлатăп: вăл фактсенчен пĕр вывод кăна тухса тарат,—вăл Горькине вĕлерес ĕçе хатĕрленессинче Рыков хутшăнни. Перремĕш, 1935 çулта Йенукидзепе Рыков блок Алексей Максимовович Горькине курайманни çинчен калаçнă. Чăн та, вĕсем ку ĕçе блокăн троцкисла-зиновйевла пайĕ çине йаваннтараççĕ, анчах вăл ĕçе нимĕн чухлĕ те улшăнтармаст. Иккĕмĕш, вĕсем Горькине чунтан курайманни çиленне сасăпа калаçнă, вăл Горькинĕн „политикăла активлăхне пĕтерес" тĕлĕшпе вăйпа тумалли мерăсем хатĕрлесен çинчен пĕлтернĕ. Тата, виççĕмĕш, вĕсем Горькинĕн политикăла активлăхне ăна хирĕç вăйпа тумалли мерăсем йышăнна пĕтерме шутлана.

Таватăмĕш, çак вăйпа тумалли мерăсен шутне Алексей Максимович Горькине вĕлерессе те кĕнĕ.

Çак вăйпа тумали мерăсем çинчен Рыковпа Бухарин пĕлнĕ. Горькине вĕлерме хатĕрленни çинчен вĕсем пĕлне, вĕлерес ĕçе вĕсем организациленĕ, вăйпа вĕлерни çинчен пытарса хăварнă. Çапла вара А. М. Горькине тискерĕн вĕлернĕ çĕре Рыковпа Бухарин хутшăннă пулнă.

Бухарин—ылханлă тилĕпе сысна хутăшĕ,—çак ыйту тăрăх хăйне мĕнле тыткалат-ха? Тилĕпе сыснана тивĕçлĕ пек тыткалат. Вăл çаврăнкалат, авкаланат. Анчах кайран, йулашкинчен, Бухарин та Рыков каланинех калат. Ку тĕлĕшпе Бухарин кăтартса панине илер-ха. Мана вăл каланă сăмахран çакна илсе кăтартса пама ирĕк парар: „1935 çулта Томский мана Горькине хирĕç Троцкий темĕнскерле усал ĕç туса иртерме хатĕрленни çинчен каларĕ".

Томский çакна ăçтан пĕлнĕ? Паллах ĕнтĕ, вăл çак директивăна пирĕн çĕршывăн чикĕ леш йенчен илсе килнĕ Бессоновран пĕлнĕ. Троцкийĕн директивĕ мĕнле пулна-ха? Горькине вĕлермеле. Бухарин калат: „Томский мана Горькине хирĕç Троцкий темĕнле усал ĕç тума хатĕрленет, тесе каларĕ". Епĕ ыйтатăп: Троцкий çак ĕçе камсем урлă туса иртерме хатĕрлет? Паллах ĕнтĕ, Троцкий аллинче тăна блок урлă, сылтăмрисем, троцкиссем, меньшевиксем тата ес-ерсем, буржуала националиссем, терлĕ теслĕ иртен-çӳренсем йаваçса пĕрлешнĕ блок урлă.

Кăна палăртнă ĕнтĕ. Бухарин хăйĕх 1935 çулта ăна Горькине хирĕçле Троцкий усал ĕç тума хатĕрленни çинчен Томский каласа пачĕ, тет.

Ку ĕнтĕ вăл Рыков çак тĕлĕшпе Йенукидзепе мĕн калаçни çинчен каласа панийĕх пулат. Вăл тата, хăй майĕпе, Бессонов хăй 1934 çулта Парижре Троцкипе мĕн калаçни çинчен каласа панийĕх пулат ĕнтĕ. Кунта нимĕнле уйрăмлăхсем те çук.

Заговорщиксем Совет влаçне хирĕç кĕрешесси пирки ыйтăва мĕнле лартнине епĕр пĕлетпĕр. Вĕсен меслечĕ—террор, урăх çĕршыва сутăнасси т. ыт. те.

Бухарин калат: тăшманла усал ĕç тăвасси çинчен калаçнине сарлакан ăнланмала, унта темтепĕр кĕрет—терророла ĕçсем тăвасси те кĕрет. Горькине вĕлерес ĕç тăни пулнă, тесе йышăнат Бухарин. Хăйĕн айăпне çакăн пек тĕтреллĕн йышăнни Бухарина пуçĕпех палăртат.

Çав виçĕ терророла акта—Менжинскине хирĕç, Куйбышева хирĕç тата Алексей Максимович Горькине хирĕç—мĕнле майсемпе туни çинчен епĕ каларăм ĕнтĕ.

Вĕсене мĕнле майпа вĕлерни уйрăмах паллă пулса тăрат. Вĕсем—майĕпен вĕлернĕ, Йагода каланă пек, вĕлерекенĕ лекмеле мар туса вĕлернĕ,—вĕлерес çĕре хутшăннисен пĕлӳвĕсемпе усă курса вĕлернĕ. Начар мар шухăшласа каларнă! Левин, Плетнев, Казаков, Максимов-Диковский, Кручков, Буланов—çынвĕлерексен банди, йурийĕх хатерленĕ бандă, çав „ĕçе" хутшăнна. Епĕ сире айăпланакан врачсем—Левин, Казаков тата Плетнев çав вĕлерӳсенче арасна вырăнта пулни çине, вĕсем вĕлерме арасна майпа усă курни çине çаврăнса пăхтарасшăн. Анчах малтан епĕ асăрхаттарса калас тетĕп. Уголовлă вĕлерӳсен историйĕпе хроники çакăн çинчен калат,—йулашки вунăçулсем хушшинче професçионалла çынвĕлерексем наркăмăш парса вĕлернисем пулманпа перех.

Çавăнпа ĕнтĕ Йагода хăйĕн усал шухăшĕсене пурнăçа кĕртме врачсене суйласа илни пĕртте ăнсăртран пулнаскер мар. Вăл, сăмах çаврăнашне каласан, историлĕ лару-тарува хисепе илнĕ.

Йулашкинчен тата манăн çакна калас пулат:—преступниксем—çынвĕлерексем Николай Иванович Йежова хирĕç терророла акта та çав планпа шухăшласа тунă. Вĕт ăна та чылаях чейе майпа вĕлерме шухăшланă, Николай Иванович Йежова унăн ĕç кабинетĕнчи сывлăша кислотара ирелтернĕ ртутпе пасса вĕлерессшĕн пулнă. Çаван чухне Йагода хытарсах асăрхаттарнă: ртутне кӳкĕрт кислотинче мар ирелтерес пулат, кӳкĕрт кислоти вăл йĕр тăват, шторсемпе гардинсене çунтарса йама пултарат, тенĕ,—çав шторсемпе гардинсене ĕнтĕ, Йагода хушнипе, кислотара ирелтернĕ ртутпе сапса тухнă, çавăн пек сывлăшпа сывлаттарса Николай Иванович Йежова вĕлерессшĕн пулнă.

Епĕ, судйа йулташсем, експертизă çак ыйту тăрăх кăтартса панисенчен хăшпĕрисене аса илтерес тетĕп. Експертизă кăтартса панинчен Йагода çав калама çук чейе те усал плана, уйрăмах Куйбышев, Горький тата Николай Иванович Йежов тĕлĕшпе, сылтăмла-троцкисла центр пĕлсе тăнипе тата ырланипе тунă,—вĕсем хăйсене тупса тытасран хăтăлса йулас тесе Николай Иванович Йежова вĕлерессшĕн пулнă.

Чи малтан епĕ сире çакăн çине çаврăнса пăхма ыйтатăп,—експертизăна совет çĕршывĕнчи тата тĕнчери медицинă ăсăлăхĕнчи чи паллă çынсене уйарнă. Експертизă пĕр шухăшлă пулса çакна палăртрĕ: А. М. Горькине, В. В. Куйбышева, Менжинскине вĕлернĕ майсем теплĕн шухăшласа тунăскерсем пулнă, çак калама çук паллă çынсене çавăн пек теплĕн шухăшласа тунă майсемпе вĕлернĕ.

Çавăнпа епĕ çапла калатăп: айăпласа çырни тăрăх айăплана-кансем çине хунă айăпсене, епĕ, государствă йачĕпе айăплаканĕ, çав айăпсене тивĕçлипех хунă тесе тăратăп, çак телте те тĕрĕс хуни туллин курăнчĕ.

Айăплун çак пайĕ çинчен каласа, епĕ икĕ çын çинчен—айăпланакан Йагодапа Левин çинчен уйрăмах чарăнса тăрасшăн.

Йагода çинчен калаçу кĕске пулат. Йагода—çав тĕлĕнмеле преступленисен тĕп организаторĕ тата хавхалантараканĕ; Йагода—просто Йагода çеç мар, çав вăхăтра вăл ОГПУ председателĕн заместителĕ пулнă, вăл ОГПУ председателĕ вырăнче пулнă,—çавăнпа унăн ответлăхĕ тата вăйлăрах та пысăкрах. Вăл çынăн государствă хăрушсăрлăхне сыхласа тăмала пулнă. Йагода хăй тунă преступленисен, хăй тунă тесе йышăннă преступленисен мĕлйунмĕш пайне тунă пулас пулсан та, манăн судран Йагодана персе пăрахмала тума ыйтма тивĕç пулатчĕ.

Вĕлернĕ çĕрте Левин паллă вырăнта пулнă. Левин—Йагода шухăшласа хунă вĕлерӳсен тĕп организаторĕ пулнă, вăл çав ĕçе Казаковпа Плетнева хутшăнтарнă, Левин çав ĕçре Йагодан сылтăм алли пулнă,—Йагода тунă пур преступленисенче те унăн сылтăм алли Буланов пулнă пекех.

Левин аллине пула Алексей Максимович Горький вилнĕ хыççăн, Левин, медицинă ăсăлăхĕсен докторĕ, хаçатсенче — „Алексей Максимович Горькин йулашки кунĕсем" йатлă некролог пичетлесе кăларнă. Çав некрологра вăл аслă çын вилнишĕн хуйхăрнă пек, йаланшăнă пек туса çырнă. Вăл икĕпитленсе, улталаса: „Аслă çынсем пурнасса та аслă çын пекех пурăнаççĕ, вилессе те аслă çын пекех вилеççĕ", тесе çырнă,—Левин—„çак некролог авторĕн, усал çынвĕлеренĕн аллине пула", тесе çырмасăр хăварнă.

Кунта пурте пĕр çĕре пĕрлешĕнсе кайнă—икĕ—питленсе сусăçтерни те, хăй „сиплесе" вĕлернĕ çынан пуçвĕçĕнче тăрса йĕрекенĕн намăссăрлăхĕ те.

Çавăн пек вăл Левин! Йагодаран нумай уйрăм мар!

Епĕ сире, йулашкинчен, Йагода кăтартса панине аса илтересшĕн, унта вăл хăйĕн моральлĕ сăн-питне, апла калама йурат пулсан, кăтартса парат.

Акă Йагода кăтартса панинчен илни—еçри 58-мĕш листаран:

„Епĕ хаман пĕтĕм пурăнăç тăршшĕпех маскăпа çӳренĕ, хама çирĕп большевик пек кăтартнă. Чăннипе илсен епĕ чăн-чăн большевик нихçан та пулман".

Тата малала:

„Епĕ вакбуржуалă сийрĕн тухнине пула, теори йенпе хатĕрленни çуккине пула, Совет влаçĕ организациленнĕ вăхăтран пуçласах, епĕ парти ĕçĕ таткалан çĕнтерессине шанман çын пулнă".

„...Çавăнпа епĕ Рыковпа, сылтăммисем хушшинче манăн ăраснă вырăнта пулмала тесе, каласса тăтăлтăм".

Рыков Йагодана та паллăнах хăй хыççăн туртнă мĕн. Вĕт, тĕп шухăшне илсен, Йагода калани вăл—политикăла карйерисăн, усал та йĕрĕнчĕк çынан предателле икĕпитленмели кивĕ шкуле, вăл вет Жозеф Фуше системи.

Çаван пек ĕнтĕ Йагода. Вăл айăпланакансен тенкелĕ çинче, Бухаринпа, Рыковпа йунашарах, паллă вырăнта ларат. Вăл чи пысăк заговорщиксенчен пĕрийĕ, Совет влаçĕн паллă тăшманĕсенчен пĕрийĕ, чи усал изменниксенчен пĕрийĕ, вăл—Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ушкăн организацилеме хăтланнă тата çав ушкăна изменниксене —Паукера, Воловича, Гайа, Винецкине тата ыттисене те, поляксемпе нимĕçсен шпионĕсемпе разведчикĕсем пулнăскерсене, кĕртсе ушкăн тунă. Çакăн пек çын пулнă Йагода, вăл совет разведкине совет халăхне ыртуса, социалисăм строителствине ыртуса еçлетерес вырăнне, ăна хамарăн халăха хирĕç, револьуцийе хирĕç, социалисăма хирĕç çаврма хăтланнă.

Пулмарĕ вăл, пĕтсе ларчĕ! Йагодана тăрă шыв çине кăларнă, хамăрăн государствăн аппаратĕнчен кăларса ывăтнă, айăпланакансен тенкелĕ çине лартнă, хĕçпăшалсăрлатнă, халĕ ĕнтĕ ăна пурнаçран та кăларса ывăтмала.

Йуридически ыйтусем

Епĕ каласа пĕтеретĕп. Йулашкинчен епĕ хăшпĕр ыйтусене лартасшăн, епĕ çав ыйтусене—йуридически ыйтусем, тесе калăттăм.

Чи малтан—преступлени тунă çĕре йĕрмешсе кайнисем çинчен. Судри следствинчен çакă курăнчĕ—çак суд процесĕнче пăхса тухнă преступленисене тунă çĕре айăпланакансем пурте пĕртанмар хутшăннă.

Кунтан—айăпланакансем кашнийĕ, айăпласа çырни тăрăх вĕсем çине хунă айăпсемшĕн мĕн чухлĕ ответ тытма тивĕçли тата ответ тытмали çинчен ыйту тухса тăрат.

Иккĕмĕш ыйту—айăпланакансем çине айăпсене тивĕçлипе хунине мĕн таран палăртни çинчен.

Виççĕмĕш ыйту—айăпланакансем çине мĕнле наказани хума тивĕçлĕ. Епĕ, чи малтан, иккĕмĕш ыйту çине ответ парăп. Айăпланакансем преступленисене тунине палăртнă-и тата мĕн таран палăртнă? Ман шутпа, судйа йулташсем, есĕр хăвăран приговорта çак ыйту çине: çапла, палăртнă, тесе ответлетĕр. Айăпланакансем хăйсем йышăннипе палăртнă, суд умĕнче пулнă свидетелсем палăртнă, медицинă експертизин закльученийĕ тăрăх палăртнă, айăпланакансен айăпĕсене кăтартса тăракан йапаласем те çавна палăртса тăраççĕ.

Суд аллинче халь ĕнтĕ уголовлă процесра пулма пултаракан доказателствăсем пурте пур. Суд, çав доказателствăсем тăрăх, преступленисем тунă преступниксенчен хăшĕ мĕн чухлĕ айăплине палăртма пĕлĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, çав заговорла бандă тунă пĕтĕм преступленисемшĕн айăпланакансенчен кашнийĕ мĕн чухлĕ ответ тытмала. Ку ыйту çине епĕ çапла ответлетĕп: кашнин пĕтĕм преступленисемшĕн ответ тытмала. Мĕншĕн?

Кашни айăпланаканăн, заговорла организацин членĕ пулнăскерĕн, пĕтĕм преступленисемшĕн ответ тытмала,—вĕсем кашнийĕх заговорла организацин преступленилĕ задачисемпе тĕллевĕсене, çавсене пурнăçа кĕртмели преступленилĕ майсене те пĕлсе тăнă, кашнийĕх вĕсене ырланă тата йышăннă. Кунта епĕр, преступлени тăвакансем „ĕçе хăйсем хушшинче", бандăна хутшăннисен аллинче пур пахалăхсемпе майсене кура, уйăрнине анчах куратпăр. Пĕтĕм заговоран интересĕшĕн çавăн пек пулмала пулнă та ĕнтĕ вăл.

Ку ĕçре, судйа йулташсем,—заговорла ушкăн, йутçĕршыв разведкисен агентури пулнă, унăн пур членĕсем те преступлени тумали пĕр тĕллевпе пĕрлешнĕ. Уйрăм преступниксем кашнийĕ тунă преступленисем айăпланакансем пурте пĕрле тума палăртнă преступленилĕ еçĕн пайĕсем анчах пулса тăраççĕ.

Çавна, айăпланакансем пурте пĕр пекех преступлени тунине, айăпланакансене пурне те РСФСР УК 58—11 статйи тăрăх айăплама палăртса йуридически майпа кăтартса панă.

Анчах вăл пурин те пĕр пек ответ тытмалине пĕлтермест-ха. Айăпланакансенчен кашни çак еçре мĕнле вырăнта пулнине кура, судан кашнин çине уйрăмăн пăхмала пулат.

Епе, çав йенчен пăхса, айăпланакансенчен иккешне—Раковскине тата Бессонова ыттисенчен уйăрма кирлĕ, тесе шутлатăп. Ман шутпа, Раковскине, вăл Совет государствине хирĕç, Совет влаçне хирĕç пит йавăр преступленисем тунă пулин те, вăл хăй „сылтăмла-троцкисла блок" тунă пур пысăк преступленисенчен те темскерле уйрăмрах тăна май, ытти айăпланакансене памали наказанирен пĕчĕкрех наказани памала.

Бессонов çинчен те çаван майлах калама пулат, вăл, паллах ĕнтĕ, Черновран, Розенгольцран, Крестинскинчен йе Рыковран арасна. Вăл, Бессонов, çыхăну тытаканни (связист) пулнă,—ку та преступленилĕ ĕç, анчах ăна çак ĕç тăрăх айăпланакан тĕп çынсен преступленийĕсенчен ăрасна хаклама.

Çав çынсем тĕлĕшпе епĕ 1937 çулхи октăбĕрĕн 2-мĕшĕнчи саккунпа усă курма пулат, тетĕп, вăл саккун суда уйрăм тĕл килсе тухсан наказани парассине—10 çуллăха хупса лартассипе персе пăрахасси хушшинчи наказанине суйласа илме май парат. Раковскине тата Бессонова 25 çуллăха тĕрмене хупмала тусан çитет, тесе шухăшлатăп епĕ.

Айăпласа çырни тăрăх, айăпланакансем пурте акă мĕншĕн айăплă: вĕсем 1932—1933 çулта, йутçĕршыв государствисен разведкисен заданийĕ тăрăх, „сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн тунă, вăл ушкăн преступленисем—кунта палăртнă преступленисене тăвас тĕллев тытнă.

Çакна палăртнă: блокра хăшпĕр йутçĕршыв государствисен агенчĕсем тăнă. Çакна палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" хăшпĕр йутçĕршыв государствисемпе, вĕсенчен преступленисем тума, Совет влаçне сирпĕтсе йама, ССР Союзĕнче помещиксемпе капиталиссен влаçне туса хума пулăшу илес тесе, тăтăшах саккунсăр çыхăну тытнă.

Çакна палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" çав государствăсене усă кӳрсе тăтăшах шпионаж туса пынă, государствăн пит паха вăрттăн материалĕсене парса тăнă.

Çакна палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" çав тĕллевсемпех пирĕн халăх хуçалăхĕн терлĕ отраçлисенче—промышленнаçра, йалхуçалăхĕнче, финанс ĕçĕнче, коммуналла хуçалăхра, чукунçулсем çинче т. ыт. çĕрте те тăтăшах сăтăр туса, диверсисем туса пынă.

Çакна палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" ВКП(б)П тата Совет правителстви руководителĕсене хирĕç терророла актсем организациленĕ, çав „сылтăмла-троцкисла блок" С. М. Кирова хирĕç, В. Р. Менжинскине хирĕç, В. В. Куйбышева хирĕç, А. М. Горькине хирĕç терророла актсене пурнăçа кĕртнĕ, çавăн пекех тата М. А. Пешкова вĕлернĕ.

Çакна палăртнă: блок пирĕн партипе правителства руководителĕсене хирĕç тата чылай терророла актсем организациленĕ, анчах, пирĕн телейе, çав терророла актсене пурнăçа кĕртме ĕлкереймен.

Вĕçлесе калани

Айăпланакансем тунă преступленисен тискерлĕхне пĕтĕмĕшпе кăтартса пама сăмахсем те çитмеççĕ. Тата—кирлĕ-и çавна вальльи мĕнле те пулин сăмахсем?—тесе ыйтатăп епĕ. Çук, судйа йулташсем, çавăн пек сăмахсем вĕсем кирлĕ те мар. Каламали сăмахсене каланă, ĕçе тĕпĕ-йĕрĕпех тĕнчесе тухнă. Çав тĕлентермĕшсем камсем иккенне халь ĕнтĕ пĕтĕм халăх курса тăрат.

Пирĕн халăх тата пĕтĕм тĕнчери тӳрĕ кăмăллă çынсем пурте сирĕн тивĕçлĕ приговора кĕтеççĕ. Сирĕн приговор хамăрăн пĕтĕм аслă çĕршыв тăрăх çĕнерен паттăрла ĕçсем тума, çĕнĕ çĕнтерӳсем тума чĕнекен чан саси пек илтĕнтĕр! Сирĕн приговор советла тивĕçлĕ наказанин сывлăша уçăлтаракан, пĕтĕм ыр-мара тасатакан аçа-çиçĕмĕ пек йанаратăр!

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пĕчĕккисенчен пуçласа ваттисем таринех, пурте çакна кĕтеççĕ тата ыйтаççĕ: хамăрăн тăван çĕршыва сутнă изменниксемпе шпионсене, усал йытăсем вырăнне хурса, персе вĕлермеле!

Пирĕн халăх çакна ыйтат: ылханлă çĕлен-калтасене таптаса лапчатăр!

Вăхăт иртĕ. Изменниксен вилтăприсем çумкурăкĕсемпе витĕнсе ларĕç,—çав изменниксене тӳрĕ кăмăллă совет çыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех ылханĕç.

Пирĕн çинче, пирĕн телейлĕ çĕршыв çинче йаланхи пекех пирĕн хĕвел хăйĕн пайăркисемпе çуттăн та телейлĕн йалтăртатса тарĕ. Епĕр, пирĕн халăх, хамăрăн йуратнă çулпуçĕ тата учител—аслă Сталин йертсе пынипе, малала, коммунисăм патне, ĕлĕкхин йĕрĕнчекесенчен тасатнă çулпа—халиччен хи пекех малала пырăпăр!

* * *

ХРОНИКĂ

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" ĕçĕ тăрăх судпа айăпланă çынсем—**Н. И. Бухарин, А. И. Рыков, Г. Г. Йагода, Н. Н. Крестинский, В. И. Иванов, М. А. Чернов, Г. Ф. Гринько, И. А. Зеленский, Акмаль Икрамов, Файзулла Ходжайев, В. Ф. Шарангович, П. Т. Зубарев, П. П. Буланов, Л. Г. Левин, И. Н. Казаков, В. А. Максимов-Диковский, П. П. Крючков** каçару пама ыйтнине пăхса тухсан, ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ вĕсене каçару памала мар тунă.

(ТАСС).

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинче ĕçлекенсен коллективĕ „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакци сотрудници

ЙЕГОРОВА Зойа Терентйевна

1938 çулта мартăн 15-мĕшĕнче çĕрле 1 сехетре, Шупашкарти больницăра вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

Рабочисемпе, Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хули совĕчĕн президиумĕ

1938 çулхи йанварĕн 9-мĕшĕнче йышăннă обйазательнăй постановлени тăрăх („Чăваш Коммунĕ" 1938 çулхи февралĕн 6-мĕшĕ), ирĕкре хуçасăр çӳрекен йытăсене, обйазательнăй постановленин 2-мĕш пункчĕ каланă тăрăх, мăй çыххисĕр тата регистрацилĕ номĕрсĕр çӳрекен йытăсене тыта-тыта пĕтереççĕ.

Тытнă йытăсене çу шăратакан пункт çуртĕнче виçĕ кун усраççĕ. Ку вăхăтра йытă хуçисем пымасан, тытнă йытăсене вĕлереççĕ.

Академи театрĕнче

Мартăн 16-мĕшĕнче

Вырăсла спектаклĕ

ПРЕМЙЕРА

Н. В. ГОГОЛЬ

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиссор Г. В. СТРАНСКИЙ лартат.

Художник Й. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 138.

Абонемент № 7 талон № 14.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус, 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайăла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 133 Гор. Чебоксары. Типографии № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.000 28—94 см. 1—1 п. л.